Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 НОЙАБĔР 14 ТУНТИКУН 261(5074) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактăран — 0—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—7—97, йалхуçалăх пайĕн — 4—97, советсен пайĕн—0—88, промышлĕннăç пайĕн—0—85, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

1938—39 çулти вăрман хатĕрлев планне тултарассишĕн

ПСК(б) Парти Тĕп Комитечĕ тата ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ кăçал октябĕр уйăхĕнче иртернĕ вăрман хатĕрлекенсен канашлăвĕнче çуллахи вăхăтра вăрман хатĕрлевĕ начар пынине тата вăрман хатĕрлекен организацисем кĕркуннепе хĕллехи тапхăра çителĕксĕр хатĕрленнине палăртнă. Партипе правительства пысăккăн пулăшаççĕ пулин те, вăрман хатĕрлекен организацисен руководителĕсем сăтăрçăсен сийенлĕ ĕçĕсен йулашкийĕсене пĕтерес тĕлĕшпе татăклă ĕççем туман, плана тултарассишĕн те большевикла тимлĕхпе кĕрешмен. Чăвашвăрманпром кăçалхи çулăн иртнĕ 10 уйăхри планне хатĕрлессипе 59,5 процент, хăйсен обозĕпе турттарассипе 55,1 процент, трактăрсемпе турттарассипе 30,7 процент, механисăмсемпе турттарассипе 45,7 процент тата хатĕрленĕ йăвăçа кирлĕ вырăна çитерес плана 40 процент çеç тултарнă. Вăрман хатĕрлекен организацисен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕх — вăл руководителсем йенчен производства участкисем çине тивĕçлĕн пăхманни пулать.

Чылай вăрманпромхозсемпе механизациленĕ вăрманпункчĕсенче производства процессене тата ĕçе кирлĕ пек организацилемен. Кунашкал тĕслĕхсем уйрăмăнах механизациленĕ вăрманпункчĕсен ĕçĕнче палăраççĕ. Участкăсенче, складсенче çирĕп ĕç йĕрки çук. Кунти руководителсем вăрман хатĕрлев ĕçне уйрăм çынсен ушкăнĕсене парас та ĕçе йĕркелессинчен пăрăнса тăрас йăлана халĕ те пĕтермен. Инженерла-техникла работниксене канцелйари ĕçне ытларах тутарас йĕрке пайанхи кунччченех тăсăлса пырать. Производствăна лайăх йĕркелес тĕлĕшпе ĕçлеме тивĕçлĕ работниксене—маçтăрсене нумай тĕрлĕ сводкăсем çырнă çĕрте, хуçалăх ĕçĕсене тунă çĕрте ĕçлеттереççĕ.

Вăрман хатĕрлекен организацисене промышлĕннăç предприйати пек ĕçлекен тăвасси çинчен сахал мар калаçнă. Анчах калаçнисем калаçнипех йулаççĕ. Ĕç графикĕсене туман, тунă пулсан та, вĕсене мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине тĕрĕслессине организацилемен. Стаханăвла йухăма йĕркелĕн çĕклесе сарса пымаççĕ. Çапла ответлăха туймасăр, йĕркесĕр ĕçленине пула ĕç тухăçлăхĕ те пĕчĕк, машинăсемпе усă курасси те йапăх пулса пырать. Иртнĕ 10 уйăх хушшинче ĕç тухăçлăхне ÿстерессине: хатĕрлессипе 71 процент, механисăмсемпе турттарассипе 56 процент кăна тултарнă. Турттарас ĕçре трактăрсемпе 42 процентпе, автомашинсемпе 40 процентпе çеç усă курнă. Ку ĕнтĕ стаханăвла йухăма чăрмантаракан сăлтав пулса тăрать. Çавăн çине кăтартса параççĕ фактсем.

Акшкÿлти механизациленĕ вăрманпункчĕ ытти вăрманпромхозсемпе пĕр пек условисенчех ĕçлет. Вăл вунă уйăхри плана хатĕрлессипе 104 процент, обозпа турттарассипе 174 процент тата механисăмсемпе турттарассипе 92 процент тултарнă. Çав вăхăтрах Кирери механизациленĕ вăрманпункчĕ хатĕрлессипе плана 47 процент, турттарассипе 40 процент çеç тултарнă. Улатăр вăрманпромхозĕ çинчен те çавнах каламала. Çак тĕслĕхсем вĕсем плана тултарма кирлĕ условисем çителĕклĕ пурри çине тата ĕçĕн ăнăçлăхĕ ăна организациленинчен килни çине кăтартса параççĕ.

Вăрман хатĕрлес плана тултарас тĕлĕшпе кайа йулса пырассине пĕтерсе, çултаăка ăнăçлăн вĕçлеме пирĕн условисемпе майсем çителĕклĕ пур. Большевикла тимлĕхпе ĕçлени кăна кирлĕ. Хăшпĕр вăрманпромхозсемпе районри организацисем вăрман хатĕрлев планне ăнăçлăн пурнăçа кĕртмеле тăвас тĕлĕшпе чылай ĕççем тунă. Çĕмĕрле районĕнче нойабĕрĕн 1-мĕшне вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлеме колхозсемпе договăр тăвас плана 91 процент, турттарнă çĕрте ĕçлеме договăрсем тăвас плана 128 процент тултарнă. Ĕç вăйĕ пухма договăрсем тăвассипе Хĕрлĕ Чутай районĕ те çĕмĕрлесенчен йулмасть. Çав вăхăтрах чылай районсем вăл ĕç çине тивĕçлипе пăхмаççĕ. Уйрăмăнах Шăнкăртам, Шăхасан районĕсем начар ĕçлеççĕ. Шăхасан районĕнче вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлеме договăрсем тăвас плана 2 процент çеç тултарнă. Ку çитменлĕхе пĕтермеле.

Чăвашвăрманпром тата вăрманпромхозсен руководителĕсен çезонлăха пынă ĕç вăйĕ çине кăна шанса лармала мар, вăрманта йалан ĕçлекен кадрсем хатĕрлемеле. Ĕçе лайăх организацилени тăрăх ĕçлеме лайăх условисем туса парса, пĕтĕм ĕç вăйĕпе туллин усă курмала тăвас пулать.

Вăрман организацисенче пулнă халăх тăшманĕсем вăрман хатĕрлевне аркатас тĕлĕшпе сахал мар сăтăрла ĕççем тунă. Вĕсем уйрăмăнах; ĕçлекенсене тÿрĕмĕн тивекен ĕçе—вăрманти рабочисен пурнăç условисене лайăхлатас йенĕпе тумали ĕççене йапăхтарма тăрăшнă. Анчах тăшмансем ку йенĕпе туса хăварнă сăтăрлăха пĕтерессипайанччченех йерипен пырать. Чăвашвăрманпром çуртйĕрсем тăвассине кăçал та пурнăça кĕртсе çитереймен. Çуртйĕрсем тума панă укçаран 57 проценчĕпе çеç усă курнă. Уйрăмăнах Вăрнар вăрманпромхозĕнче, Кирери механизациленĕ вăрманпунктĕнче ĕççем йапăх тăраççĕ. Уншăн профсойуз организацисем те айăплă, вĕсем çуртйĕр строительстви ĕçĕ мĕнле пынине тĕрĕслесе пымаççĕ.

Вăрман хатĕрлевĕнче стаханăвла тухăçлăхпа ĕçлекенсем сахал мар. Çĕмĕрле вăрманпунктĕнчи трактăрис Г. С. Чугунов йулташ рельсăлă çул тăрăх турттарса нормăна 178 процент тултарать. Кун пек ĕçлекенсем кашни участкăрах пур. Анчах хуçайственниксем, стаханăвĕçсен опытне сарса пырса, пĕтĕм коллектива стаханăвла ĕçлекен тăвас, стаханăвĕçсене куллен пулăшу парас вырăнне вĕсемсĕр шавланипе вăхăта ирттереççĕ. Тата çакна калас пулать, хăшпĕр çĕрте нормăна пĕр процент ирттерсе тултаракансене те стаханăвĕç тесе шутлаççĕ. Çапла тунипе стаханăвĕçăн тивĕçлĕ хакне чакараççĕ. Кунашкал çĕрĕк практикăна тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтермеле. Ĕç укçине тĕрĕс тÿлемеле тăвас пулать. Нормăсене тĕрĕс тумала.

Вăрман хатĕрлев планне йалан ăнăçлăн тултарса пымала тăвасси вăл—кашни вăрманпромхоза, вăрманпунктне, участкăна промышлĕннăç предприйатийĕ пек ĕçлекен тунинчен килет. Апла тăвас пулсан халех пур механисăмсене те йусаса йĕркене кĕртмеле, вăрманта йалан ĕçлекен кадрсем çителĕклĕ хатĕрлемеле, ĕçлеме лайăх условисем туса памала, политикăлла-массăлла ĕçе вăйлатмала. Вăрман организаци руководителĕсен, партипе профсойуз организацисен çавсене кĕске вăхăтрах пурнăçа кĕртсе çитерсе, 1938—1939 çулти вăрман хатĕрлев планне пĕтĕмĕшпех тултармала тăвас пулать.

М. М. Литвинăв йулташ патĕнче пулнă йышăну

Кăçалхи нойабĕрĕн 7-мĕшĕнче каçхине Йут çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ М. М. Литвинăв йулташ Октябĕрти Социалисăмлă Аслă революци 21 çул тултарнă йатпа Йут çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн особнйакĕнче диплomaти корпусне йышăннă. Вăл йышăнура ССР Сойузĕн правительстви çумĕнчи пĕтĕм дипломати корпусĕ пулнă.

(ТАСС).

Веймарта тата Мÿнхĕнра Гитлĕр сăмах тухса каланă

Нойабĕрĕн 6-мĕшĕнче Веймарта фашисла партин Тÿрингри организаци пухăвĕнче Гитлĕр сăмах тухса каланă. Нойабĕрĕн 9-мĕшĕнче Гитлĕр Мÿнхĕнра сăмах каланă.

Гитлĕр хăйĕн сăмахĕнче Германи аллине колонисем тытса илесси йытăва çивĕччĕн кăларса тăратнă. Çавăн пекех Гитлĕр Черчилль, Дафф Купер тата Иден çине тапăнса каланă.

(ТАСС).

5.473.000 тенкĕ пулăшу панă

Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссариачĕ пĕлтернĕ тăрăх, нумай ачалă амăшсене государствăран пулăшу парасси çинчен саккун тухнăранпа Чăваш республикĕнче нумай ачалă амăшĕсене мĕн пурĕ 2.577 çынна 5 мĕлйун та 473 пин тенкĕ парса пулăшнă. Кунсăр пуçне кăçал тата 1 мĕлйун та 852 пин тенкĕ параççĕ.

Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенчи суйлавсем

Нойабĕрĕн 8-мĕшĕнче Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенче конгрес (парламент) суйлавĕсем пулса иртнĕ.

Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенче питĕ пысăк та вăйлă буржуалă партисем иккĕ: демократилĕ парти (Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсен халĕхи министрĕ Рузвельт çак партире тăрать) тата республикăлă текен парти — ку вăл ытларах реакцилĕ, фашисăма çывăх тăракан парти.

Суйлав умĕнхи кунсенче çĕршыври реакцилĕ елементсем пĕтĕм вăйхалне мобилизациленĕ. Суйлав умĕнхи кĕрешÿре вĕсем фашисла демагогин пур меслечĕсемпе те усă курнă, расăлă тата тĕнлĕ хирĕçÿсем чĕртсе пынă. Республикăлă партин официаллă мар кандидачĕсем, Рокфеллĕр, Морган тата ытти пысăк миллиардĕрсемпе промышлĕнниксем пулăшса тăраканскерсем, суйлавçăсен умĕнче демагогилĕ сăмахсем пама именсе тăман, вĕсем налог йăвăрлăхне çăмăллатма, халĕхи вăхăтри економикăлă кризис вăйлăн хĕсекен фермĕрсене пулăшу пама, економикă тĕлĕшĕнчен чылай реформăсем тума сăмах панă. Республикăлă партин вăрттăн ĕçлекен агĕнчĕсем домократилĕ партин кандидачĕсене хирĕç урса кайсах фашисла агитаци тунă, халĕхи вăхăтра çĕршывра палăракан економикăлă йăварлăхсемшĕн йăлтах демократилĕ парти айăплă, тесе каланă.

Республикăлă партин суйлав умĕнхи кампанийĕ валли банкирсемпе капиталиссем укçа-тенкĕ шеллесе тăман. Америкăри пысăк капиталиссем хушнине итлесе тăракан хаçат-журналсем пурте пекех демократилĕ партине хирĕç, Рузвельта хирĕç çырнă.

Çакăнпа пĕр вăхăтрах реакцине хирĕç. Рузвельт майлă тăракансем суйлав умĕнхи кунсенче йаланах кирлĕ пек хăйулă пулман, пĕтĕм малта пыракан, демократилĕ вăйсене хăйсем тавра пĕрлештерес тĕлĕшпе кирлĕ пек ĕçлемен.

Реакционерсемшĕн усăлă çак условисенче республикăлă парти кĕçĕн палатăра мандатсен шутне 75 вырăнлăх, çÿлти палатăра 8 вырăнлăх ÿстернĕ, анчах апла пулсан та демократилĕ парти çĕнтернĕ.

Конгресăн кĕçĕн палатинче демократсен 328 мандат пулнă (вăл пурĕ 435 депутатран тăрать), халь ĕнтĕ вĕсен 261 мандат. Демократилĕ партин сенатра 8 вырăн çухалнă. Демократилĕ парти членĕсенчен суйланă губернатăрсен шучĕ ĕлĕк 41 пулнă, халь 30 йулнă. Уйрăм штатсен саккунсем кăларакан собранин суйлавĕсенче те демократилĕ парти хăшпĕр тĕлсенче мандатсем çухатнă.

Анчах Рузвельт майлă тăраканнисем суйлав кампанинче вăйлăн ĕçленĕ çĕрте (Нйу-Йоркра т. ыт. штатсенче) реакцине туймалах сийенсем кÿнĕ.

Республикăлă парти кăштах çитĕнÿ тунă пулсан та, суйлавсенче демократсем кирлĕ чухлĕ нумайрах саса пухнă.

Ку ĕнтĕ çакна кăтартса парать: халăхсен анлă массисем президент политикине ырлаççĕ, уншăн тăраççĕ, вĕсем реакцине хирĕç, фашисăм хăрушлăхне хирĕç кĕрешме малта пыракан пур вăйсене те пĕрлештерме тăрăшаççĕ.

Паллах, реакционерсем, чылай штатсенче çĕнтернĕ хыççăн, Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсене фашисла политикă çулĕ çине пăрса йама тăрăшса, çĕнĕ атакăсем тума пуçлĕç.

Пĕрлĕхлĕ демократилĕ фронт, реакцин киревсĕр ĕçĕсене отпор пама пултаракан фронт тăвасси,—йулашки кунсенче Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенчи пĕтĕм малала туртăнакан вăйсен лозунгĕ пулса пырать.

(ТАСС).

Германире йеврейсене хирĕç погромсем тăваççĕ

Нойабĕрĕн 10—11-мĕшĕсенче Германире пур çĕрте те йеврейсем хушшинче массăлă погромсем пулса иртнĕ.

Берлинра, Мÿнхĕнре, Нÿрнбергра тата ытти хуласенче те фашисла погромщиксен бандисем йеврейсен килĕсене, магазинĕсене пырса кĕрсе çаратнă, йеврейсене хĕненĕ. Темиçе пин йеврейсене хăйсен хватерĕсенчен урама кăларса ыватнă, вĕсем выçă тăрса йулнă.

Мÿнхĕнра 6 пин йеврейа Германирен тухса кайма хушнă. Çак приказа пăхăнмасăр „айăпа кĕнĕ“ йеврейсене концентрацилĕ лагĕрсене хупса лартаççĕ. Германи влаçĕсем сĕт сутакан лавка хуçисемпе çăкăр лавки хуçисене, штравпа хăратса, йеврейсене çимĕççем сутма чарнă.

Фашисла полици йеврейсене ушкăнĕ-ушкăнĕпе арĕслеме тытăннă. Берлинра 10.000 çынна арĕсленĕ. Арĕсленĕ йеврейсене темĕн тĕрлĕ хĕнесе асаплантараççĕ, вĕсенчен мăшкăлаççĕ.

Фашисла правительства çĕнĕ саккун кăларнă. Вăл саккун тăрăх, 1939 çулти йанварĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа йеврейсене пĕчĕк лавкасем тытма, ремесла ĕçĕпе пурăнма, хăйсене уйрăм предприйати тытма чараççĕ.

Йеврейсен магазинĕсемпе хватерĕсене çĕмĕрсе тăкнă пирки пулнă тăкаксене йеврейсен хăйсен чăтмала, çĕмĕрсе тăкнă магазинсемпе хватерсене хăйсен йĕркене кĕртмеле. Страховой общĕствăсен йеврейсене тÿлемели страховой укçисене государствă конфискацилет. Кунсăр пуçне тата йеврейсене пĕр мĕлйард маркăлăх штраф тÿлеттермеле тунă, çак штраф укçи те государствă фондне кĕрет.

Йеврейсем хушшинче çакăн пек массăлă тискер погром туни пĕтĕм тĕнчене тарăхтарать.

Йут çĕршывсенчи хаçатсем: Германире фашисла влаççем хăйсем тÿрех хутшăннипе пулса иртекен тискер ĕççем пирки пĕтĕм цивилизаци тĕнчи тарăхать, тесе çыраççĕ.

(ТАСС).

Польшăпа Венгрин ишĕлтерÿлĕ ĕçĕсем

Закарпатски Украинăран Венгрипе Польшă террорисĕсем çапăлах Закарпатски Украинă çине тапăнма пăрахманни çинчен пĕлтереççĕ. Çак кунсенче анчах Торрунăна Венгри чиккинчен террориссен пысăк банди пырса тухнă. Вĕсем кĕпере çĕмĕрсе тăкма тăрăшнă, Чехословакин чикĕри хурал начальникне вĕлернĕ. Чылай çĕрте террориссемпе Чехословаки çарĕн чаçĕсем хушшинче хĕçпăшаллă тытăçусем пулса иртнĕ.

Закарпатски Украинăн çурçĕр пайĕнче Польшă территоринчен пынă террорисла бандăсем хăйсен киревсĕр ĕçĕсене тăваççĕ. Закарпатски Украинăпа йунашар районсенче Польшă йатарласа диверсантсемпе террориссене хатĕрлекен курссем уçнă. Курсран вĕренсе тухнă хыççăн вĕсене Закарпатски Украинăна йараççĕ.

Польшăпа Венгри Закарпатски Украинăра çакăн пек ишĕлтерÿлĕ ĕççем туни—çак икĕ государствă çапăлах пĕр-перинпе йунашар чикĕсем тăвас шухăша пăрахманни çинчен калать.

(ТАСС).

„Мирпе ирĕклĕхшĕн кĕрешекен йухăмăн“ конгресĕ

Нойабĕрĕн 11-мĕшĕнче, Парижре, „Мирпе ирĕклĕхшĕн кĕрешекен йухăмăн“ национальнăй конгресĕ уçăлнă. Конгреса 2 пин делегат пухăннă. Малтанхи ларура Францири наукăпа политикă тата общĕствă ĕçĕнчи паллă деятелĕсем нумай пулнă.

Ланжевен профессăр хăйĕн сăмахĕнче Совет Сойузĕ тытса пыракан мир политики çинчен каланă, вăл фашисла агрессăрсене çавăрлăхламали чи тĕрĕс майĕ—вĕсене хирĕç коллективлăн сыхланмала тăвасси пулать, тесе кăтартнă.

Конгресра нумайах пулмасть Совет Сойузĕнчен таврăннă профессăр Коен тухса каланă. Вăл Совет Сойузĕн тĕлĕнмеле чаплă çитĕнĕвĕсем çинчен каланă. Конгрес, пурте пĕр шухăшлă пулса, Совет Сойузĕ тытакан политикăна ырласа тата Франципе Совет Сойузĕ хушшинче тунă пакта тĕреклетсе пыма ыйтса резолюци йышăннă.

(ТАСС).

Исмет Иненÿ—Турци республикĕн президенчĕ

Анкарăран пĕлтернĕ тăрăх, нойабĕрĕн 11-мĕшĕнче национальнăй аслă пуху (парламент), пурте пĕр сасăпа, Турци республикĕн президенчĕ вырăнне Турци республикĕн пирвайхи правительствинче премйер пулнă Исмет Иненÿне суйласа лартнă.

Исмет Иненÿ—çĕнелнĕ Турцин чи паллă деятелĕсенчен пĕри. Унăн пархатарлă ĕçĕ Совет Сойузĕпе Турци хушшинчи килĕшÿлĕ çыхăнăва вăйлатма пулăшнă.

(ТАСС).

Испанин нацилĕ оборонă министерствин зайавленийĕ

Испани республикĕн нацилĕ оборонă министерстви çакăн пек пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă:

„Хÿтлĕхсĕр хуласенчи граждăнла халăх çине бомбăсем пăрахнине тĕрĕслеме Пĕтĕм тĕнчери комиççине тунăран вара, пăлхавçăсен тискерлĕхĕ нихăçанхинчен те ытла вăйланса çитрĕ. Августăн 10-мĕшĕнчен пуçласа нойабĕрĕн 1-мĕшне çитиччченхи вăхăт хушшинче Испани республикĕнче хÿтлĕхсĕр хуласем çине 64 хутчен бомбăсем пăрахнине регистрациленĕ, çак вăхăтра бомбăсем пăрахнипе 668 çурт ишĕлнĕ, 993 çын аманса йе вилсе пĕтнĕ.“ Нацилĕ оборонă министерстви çакна паллă тăвать: „Англи парламентĕнче нумай пулмасть—Пĕтĕм тĕнчери следстви комиççине тунăран вара бомбăсем пăрахасси чакнă пек кăтартма тăнине Германипе Итали правительствисем хăйсемех апла мар тесе йышăнаççĕ. Цифрăсем, ĕççем пĕтĕмпех урăхла тăни çинчен калаççĕ. Вĕсем Испанире фашиссен варвăрлăхĕ вăйланни çинчен калаççĕ“.

(ТАСС).

Фашисла Германи Чехословакин çĕнĕ районĕсене тытса илме хатĕрленет

ПРАГĂ, нойабĕрĕн 10-мĕш. Тĕплĕн тĕпчесе пĕлнĕ сведĕнисем тăрăх, фашисла Германи Чехословаки территоринче çĕнĕ районсем йышăнма хатĕрленни палăрать. Нумай пулмасть Чехословакин Германи чиккинчи районĕсенче фашисла листовкăсем салатнă. Вăл листовкăсенче Чехословаки влаçĕ республикă ăшне йулнă нимĕççенчен „мăшкăлать“ тесе каллех суйа хыпарсем сарнă. Германи Чехословакин стратеги тата економикă тĕлĕшпе питĕ пысăк вырăн йышăнакан çĕнĕ районсене тытса илме хатĕрленнине çак тĕслĕхсем те лайăх кăтартса параççĕ. Виçĕмкун Тршебнице хулинче (Германине куçнă Лейтмерица хули çывăхĕнче) генлейнла штурмовиксем пăлхав туса ирттернĕ, вăл штурмовиксене Германи йенчен пулăшнă. Генлейнăвĕçсем хулана „Виççĕмĕш импери“ çумне пĕрлештерме ыйтнă. Генлейнăвĕçсен путчне пĕтерсе хунă. Кун пек фактсем чикĕри ытти вырăнсенче те пулнă.

Çĕнĕ рабочи поçолăксем

РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн 1938 çулти нойабĕрĕн 9-мĕшĕнче кăларнă Указĕ тăрăх, Чăваш республикĕнчи Иĕпреç районĕнчи халăх пурăнакан пункта Буинска тата Улатăр районĕнчи халăх пурăнакан пункта Кирене рабочи поçолăксен категорине кĕртнĕ.

Çĕнĕрен тунă рабочи поçолăксен йачĕсем малтанхи пекех йулаççĕ.

Çĕрулми хатĕрлевĕ

1938 çулшăн государствăна çĕрулми тăратмали плана мĕнле тултарнине кăтартакан СВОДКĂ

(Нойабĕрĕн 12-мĕшне, процентпа)

Улатăр	[illegible]
Елĕк	6.1
Патăрйел	42.1
Вăрнар	79.4
Иĕпреç	56.0
Ишлей	55.0
Канаш	43.3
Куславкка	47.0
Кувакинă	41.3
Хĕрлĕ Чутай	32.8
Сĕнтĕрвăрри	58.2
Пăрачкав	48.5
Турхан	58.0
Тутаркас	90,5
Трак	55.8
Вăрмар	36,2
Çĕрпÿ	43.4
Шупашкар	67,5
Шăмăршă	42,0
Шăхасан	75,2
Шăнкăртам	79,9
Çĕмĕрле	63.1
Иетĕрне	63.0
Йĕлчĕк	59.9
Тăвай	75.6

Республикĕпе 57,7.

* * *

Нойабĕрĕн 12-мĕшĕнче тухнă „Чăваш Коммунĕ“ хаçатри сводкăра Кувакинă тата Хĕрлĕ Чутай районĕсем çĕрулми тăратмали плана мĕн чухлĕ тултарнине пăтратнă. Кувакинă районĕ плана 38,3 процент, Хĕрлĕ Чутай районĕ 32,8 процент тултарнă тесе вуламала.

Татăклă улшăну туни кирлĕ

КАНАШ. Государствăна çĕрулми памали плана тултарасси, халĕхи вăхăтра, партипе совет организацисен тата çĕрĕç оргăнĕсен умĕнче тăракан ответлă ĕççенчен пĕри пулса тăрать. Апла пулсан та Канаш районĕнче çĕрулми хатĕрлевĕ йапăх пырать. Нойабĕрĕн 11-мĕшне район çĕрулми хатĕрлев планне 48,2 процент çеç тултарнă.

Уйрăм колхозсем государствăна çĕрулми тăратас йенĕпе тăрăшса ĕçленипе хăйсен обйазательствисене вăхăтра пурнăçа кĕртрĕç. Йаманкассинчи Доронин, Катекри Кирăв, Йанкăлчри Каганович йачĕсемпе тăракан тата Йăлманчари „Майăн пĕрремĕшĕ“, Вăтапуçĕнчи „Идея Ленина“, Вăрăмпуçĕнчи „Коминтерн“ колхозсем тата çав колхозсен членĕсем çĕрулмине пĕтĕмпех парса татнă.

Хăшпĕр колхозсенче государствăна çĕрулми парассине хаклăманни курăнать. Ку вăхăтчене Крупскайа йачĕпе тăракан колхоз пĕр килограм та паман. „Парижск Коммунĕ“ колхоз 42 центнĕртан 4 центнĕр, „Производитель“ колхоз 63 центнĕртан 2 центнĕр çеç панă.

Вăтакас Татмăш йалсовечĕ çĕрулми хатĕрлевĕпе пушшех йулса пырать. Йалсовечĕпе пурĕ 682 центнĕр çĕрулми памала пулнă, пулсан 205 центнĕр çеç панă. Иуманса, Çĕнĕ Ахпÿрт йалçовечĕсем плана 30 процент таран кăна тултарнă.

Районра çĕрулми хатĕрлев ĕçĕ начар пыни Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн районри уполномоченнăйĕ тата унăн агĕнчĕсем йапăх ĕçленинчен килет. Канаш районĕн çак кунсенчех çĕрулми обйазательствисене тултарма пĕтĕм вăйа мобилизацилемеле.

С. Филиппăв.

Халех парса татмал[…]

ШĂХАСАН. Октяпĕр уйăх[…] тĕлне районра 38 колхоз çĕрулми парса татрĕç. Пилĕк колхоз хăйсен планĕсене тултарасси па[…]не çывхарса çитнĕ. Çав хушăр[…] хăшпĕр колхозсенче государст[…] умĕнчи обйазательствăсене пар[…] татас пирки пачах ĕçлемеç[…] Акă Вăрман Йĕнĕш йалсовет[…] кĕрекен „Звезда“ колхозăн г[…]сударствăна 70 центнĕр çĕрулми памала пулсан, пĕрре те пама[…] Çавăн пекех, „Чуваш ЦИК“ кол[…]хоз 140 центнĕр çĕрулми пар[…] вырăнне 28 центнĕр çеç леççе п[…]нă. Государствăна çĕрулми тăр[…]тас тĕлĕшпе йединоличник хуç[…]лăхĕсем ытла та кайа йулнă, пла[…] 42,4 процент çеç тултарнă. Çĕрулми хатĕрлев планне тултармас[…] тăракан хуçалăхсем пир[…] судпа следстви оргăнĕсем ним[…] мера та йышăнмаççĕ.

С. Михайлăв.

А. А. ЖДАНĂВ ЙУЛТАШ СĂМАХĔ

ПСÇЛКС XX çул тултарнă йатпа ПСÇЛКС Тĕпкомĕн активпа пĕрле пулнă чаплă Пленумĕнче, Пысăк театрта 1938 çулти октăберĕн 29-мĕшĕнче каланă.

Йулташсем, мана Пĕтĕм Сойузри Коммунниссен (большевиксен) Партин Тĕп Комитечĕпе ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ хушнипе Ленинла Комсомола вăл çирĕм çул тултарнă йубилей кунĕнче хĕрӳлĕ большевикла салам калама ирĕк парăр. (Алă çупассĕ).

Комсомолăн хăйĕн çирĕм çулхи йубилейне мĕнпе палăртмали пур. Ун çинчен комсомолăн çак çулсем хушшинче утса тухнă мухтавлă çулĕ калат, ун çинчен комсомол социалисăм строительствин пур облаçĕсенче те, уйрăмах йулашки çулсенче, халăх хуçалăхне социалисăмла реконструкцилес ĕçе вĕçленĕ çулсенче, сталинла икĕ пилĕкçуллăхсем хушшинче тунă çитĕнӳсем калаççĕ.

Ку, йулташсем, ăнсăртран пулман.

Социалисăм çĕнтерĕвĕсем, социалисăмла економикăна çирĕплетни, çĕнĕ производствăлă отношенисем, социалисăм отношенийĕсем ӳссе пыни хăйсемпе пĕрле çынсен псиxологине улăштарчĕç, хăйсемпе пĕрле культурăна ӳстерчĕç, халăх масси хушшинчи талантсене нихăçан пулман пек çитĕнтерчĕç. Пирĕн çĕршывра социалисăмлă производствăлă отношенисем çĕнтерни тата вĕсем малалла аталанса çирĕпленсе пыни, материалă, культурăлă пурнăç çӳллĕшне мĕн чул пурăннăçем, çавăн чул ытларах та ытларах хăвăрттăн ӳссе пыма май параççĕ.

Çынсем çакăн пек улшăнса пыни комсомол опытĕнче уйрăмах сисĕнет, уйрăмах туйăнат. Вăл совет çамрăкĕсем хушшинчен малта тăракан çынсем ӳснĕ фактран курăнса тăрат, вĕсен хисепĕ кунран кун ӳссе пырат.

Ку вăл советăн çĕнĕ çынни ӳсни пулат, вăл социалисăм çĕнтернине пĕлтерет тата хăйĕнче малашнехи вăльди татах та пысăкрах майсем тытса тăрат. Ирĕклĕ совет çынни ĕç тухăçлăхĕ тĕлĕшпе, культурă, наукă, искусствă тĕлĕшпе, творчĕствăлă пурнăçăн пур йенĕпе те мĕнле результатсем пама пултарнине кăтартса пачĕ ĕнтĕ. Пирĕн совет çамрăкĕсем малала пынă çемĕн çĕнĕрен те çĕнĕрен кăтартулă ĕçсемпе рабочисемпе хресченсен социалисăмлă государствинчи гражданин мĕнле пулмалине кăтартса парĕç, пирĕн çĕршывра ĕç паттăрлăхне нумайăн ӳстерсе пырĕç. (Алă çупассĕ).

Ленинла Комсомолра членсем 5 мĕлйун ытларах. Вĕсенчен пурте мар пысăк геройсем пулса тăраççĕ, „пĕчĕк" çынсем те нумай, вĕсем пайан мар пулсан, ыран геройсем пулма пултараççĕ. Çапла ĕнтĕ, йулташсем, комсомолăн аслă геройĕсене кăна мар, унăн массине те, унăн „пĕчĕк" çынĕсене те саламлама ирĕк парăр, вĕсем те пĕтĕм çĕршыв пĕлсе тăракан геройсем пекех, пирĕн социалисăмлă революцишĕн кирлĕ ĕçе туса пыраççĕ. (Тăвăллăн алă çупассĕ).

Йулташсем, комсомолăн вăйĕпе çирĕплĕхĕн çăлкуçĕ пирĕн большевикла парти, Ленин—Сталин партийĕ йертсе пыни пулнă, пулса тăрат те, пулĕ те.

Большевиксен партийĕ çамрăксен коммунисла йухăмĕн пусламĕшĕсем патĕнче, комсомолăн сăпки умĕнче тăнă. Комсомола организацилес тĕлĕшпе тата рабочисемпе хресченсен çамрăкĕсене коммунисла вĕрентсе çитĕнтерес тĕлĕшпе Владимир Ильич ĕçленĕ. Сталин йулташ ĕçленĕ тата ĕçлет те. (Тăвăллăн алă çупассĕ).

Комсомол историйĕ социалисăмла революци историйĕпе, пирĕн большевикла парти историйĕпе тачă, çирĕппĕн çыхăнса тăрат.

Парти граждăн вăрçи çулĕсенче çамрăксене совет влаçĕн тăшманĕсене хирĕç кĕрешме çĕкленĕ. Вăл граждăн вăрçи пĕтнĕ хыççăн çамрăксене халăх хуçалăхне ура çине тăратас ĕçе мобилизациленĕ. Пирĕн парти çамрăксене халăх хуçалăхне социалисăмла реконструкцилессишĕн, çĕршыва индустриализацилессишĕн тата коллективизацилессишĕн кĕрешме çĕкленĕ.

Парти çамрăксене большевисăма вĕренсе алла илме, Маркс—Енгельс—Ленин—Сталин вĕрентĕвне вĕренсе алла илме, етемлĕх пухнă мĕнпур пĕлӳсене вĕренсе алла илме чĕнчĕ тата çĕклерĕ. Парти комсомола коммунисăмла воспитани пачĕ, ăна революцилĕ кĕрешӳн саккунĕсене вĕрентрĕ. Парти комсомола халăх тăшманĕсене тăпалтарса пĕтерме çĕклерĕ.

Парти комсомола чи пысăк пахалăхсем—хăйулăх, шиксĕрлĕх, паттăрлăх, харсăрлăх, большевикла принциплăх пачĕ.

Ака мĕншĕн комсомол хăйĕн ĕçĕнче пысăк çитĕнӳсем турĕ. (Тăвăллăн алă çупассĕ).

Пирĕн парти çамрăксемшĕн тăрăшни тата вĕсем çине пысăккăн çавăрăнса пăхни—ăнсăртран пулнă йапала мар. Пирĕн парти коммунисăмла обшчĕствă тăвас ĕçре çамрăксен рольне йаланах пысăккăн хакланă, пысăккăн хаклат те.

Çамрăксенче парти работниксен аслă ăрăвне улăштарма пыракан хăйĕн çамрăк резервине курса тăрат.

Пирĕн çамрăклăх аллинче малашлăх тăрат. Вĕсем, çамрăксем, коммунисăмла обшчĕствă тăвас ĕçре татăкла вырăн йышăнса тăраççĕ.

Ака мĕншĕн большевикла партипе совет влаçĕ çамрăксене вĕренсе çитĕнме пур майсене те параççĕ, унăн таланчĕсене ӳсме тата политикăлă, обшчĕствăлă, хуçалăхпа культурăлă пурнăçа тата ĕçе хутшăнма пур майсене те параççĕ.

Пирĕн çамрăксене ĕç прави, вĕренӳ прави, культурăлă канăç прави панă.

Пирĕн çамрăксемшĕн пур аслă шкулсен алăкĕсем те уçă, культурăн мĕнпур çĕнтерĕвĕсемпе çитĕнĕвĕсене вĕренсе алла илсе пыма вĕсене пур майсене те панă.

Парти комсомола хăйĕн шанчăклă пулăшаканĕ тата кĕрешӳлĕ резервĕ тесе шутлат, вăл унтан социалисăм строительствин пур участкисем вăльди те активлăн тата паранса ĕçлекен борецсем илсе тăрат. (Тăвăллăн алă çупассĕ).

Пирте çамрăксем—питех те пысăк вăй. Вĕсем халăх хуçалăхĕн пур отраçлисенче те пысăк йышлăн ĕçлеççĕ. Çамрăксен çитĕнĕвĕсемпе тата вĕсен ударлă, стахановла ĕçĕпе çĕнĕ техникăна алла илсе пыни, пирĕн çĕршывăн центртан пуçласа инçетри окраинăсем таран выртакан мĕнпур пуйанлăха алла илсе пыни çыхăнса тăрат.

Çамрăксен çитĕнĕвĕсемпе пирĕн йалхуçалăхне коллективизацилес ĕçри çĕнтерӳсемпе çитĕнӳсем çыхăнса тăраççĕ.

Комсомолăн çĕнĕ йалхуçалăх техникине—трактăрсене, комбайнсене тата ытти пысăк йалхуçалăх машинисене алла илес ĕçри ролĕ паллă.

Çамрăксем культурă фронтне çĕклессинче, совет искусствинче, наукăра, литературăра калама çук пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Ӳссе пыракан ăрăва вĕрентсе воспитани парас хисеплĕ тивĕçлĕх пĕтĕмпе пекех çамрăксемпе комсомол аллинче, халăх учителĕсен çарĕ аллинче тăрат.

Хăйсен йестествăлă лару-тăрăвĕпе, хăйсем çамрăк пулнипе çамрăксем пирĕн çĕршыв оборонинче—пирĕн çарта, пирĕн флотра, пирĕн авиацире калама çук пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Комсомолăн иртнĕ çулĕсем çине çавăрăнса пăхатăн та, комсомол тунă çитĕнӳсем калама çук пысăкки курăнат. Анчах манăн кунта çак çитĕнӳсен тӳнтер йенĕ çинчен те калас пулат. Ĕçре пысăк çитменлĕхсем пулман пулсан тата йулашки вăхăтра çамрăксене идейăлă воспитани парас ĕçре, комсомолти тăшманла елементсене тăрă шыв çине кăларса, комсомола вĕсенчен тасатас ĕçре, комсомол работникĕсен çĕнĕ кадрĕсене йертсе пыракан вырăнсене лартас ĕçре ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕ пысăк йăнăшсем туман пулсан, çак çитĕнӳсем чылай нумайрах пулнă пулĕччĕç вĕсем ытларах та паллăрах, пурйенлĕрех пулнă пулĕччĕç.

ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕн ĕçĕнчи çак çитменлĕхсем хăйсен çитĕнĕвĕсене ытлашши хак панипе çыхăнса тăраççĕ. Сталин йулташ ыванма пĕлмесĕр пире пурне те, вăл шутрах комсомола та, çапла вĕрентет: çитĕнӳсен хăйсен тӳнтер йенĕ пур, çитĕнӳсене ытлашши хак хуни харпăр хăйне мăнна хурасси, харпăр хăй каçăхса кайасси патне илсе пырат, хăйсен шефĕсене паранна çынсем мухтаса тăнă условире, татти-сыпписĕр саламсем, ырă суннисем, рапăртсем т. ыт. те пырса тăнă условире руководительсем хăшпĕр чухне виçене пĕлми пулаççĕ, вĕсем çитменлĕхсене курми пулаççĕ, вĕсем пирĕн çитĕнӳсен хакне тĕрĕс ăнланма, йĕритавралăх çине ура куçпа пăхма пăрахаççĕ.

Тӳрех калас пулат, партин тата комсомолăн тăшманĕсем хăшпĕр комсомол работникĕсем тĕрлĕ майпа чапшăн тата мухтавшăн çуннипе питĕ вăйлăн уçă курнă. Тăшмансем çакăнпа комсомол кадрĕсен сыхăлăхне йăвашлатма, хăйсен ирсĕр ишĕлтерӳлĕ, сăтăрла ĕçĕсене пĕр айăпланмасăр туса пыма уçă курнă.

Комсомол хушшинчи тăшманла ĕçĕн приймĕсем çинчен калас пулсан, çакна кăтартмала: халăх тăшманĕсем комсомолăн вăйсăр вырăнĕсенчен пĕрне—йăлана ыррăса тупнă, йăлана вĕсем „харпăрхăйĕн ĕçĕ" тесе пĕлтернĕ. Вĕсем морал йенчен пăсса комсомол кадрĕсене пăсăлтарса йама тăрăшнă,—ĕççе супасси, ушкăнпа ĕçкĕçикĕ тăвасси, „туслă" çыхăнусем—çаксене пурне те тăшмансем комсомолĕцсене морал йенчен пăсса, политикă тĕлĕшĕнчен те пăсма, вĕсен морallĕ çирĕплĕхне ишĕлтерсе, политикăлă çирĕплĕхне те ишĕлтерме ĕçе йанă. Самокритикă çителĕксĕр пулнă пирки, йертсе пырас ĕçре коллективлăх çителĕклĕ пулман пирки, комсомол работникĕсем нумайĕшĕ мухтанине тата каçăхса кайма йуратнă пирки, тăшманла ĕçĕн çавнашкал метачĕ комсомола пысăк сийен кӳнĕ. Епĕ тӳрех калама тивĕç, çак тăшманла ĕçсен йулашкисене комсомолра пĕтĕмĕшпех мар-ха пĕтерне.

Комсомол çирĕм çул тултарнине уйавлани пире утса тухнă çула хак пама кăна мар, çаплах черетри задачăсене те палăртма тата çак задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртме мĕн туса çитермелине, мĕн тӳрлетмелине те пăхса тухма хушат.

Комсомолăн мухтавлă историйĕ кăна мар, унăн тата та ытларах мухтавлă малашлăх пур. Кун пирки пиртен никам та иккĕленмест. Анчах пысăк çитĕнӳсемпе тата вăйлăн малала кайас тесен, комсомола малала кайма мĕн чăрмантарнине, мĕн чарса тăнине уççăн курса тăни кирлĕ.

Йулташсем, комсомолра, уйрăмах ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕн йертсе пыракан работникĕсем хушшинче, тимсĕрлĕхпе харпăр хăйне лăплантарнин елеменчĕсем пулни комсомол членĕсене идейă тĕлĕшпе вĕрентсе çитĕнтерессине сийен турĕ, кадрсен идейăлă тата политикăлă ӳсĕмне сийен турĕ. Тумасăр хăварнине туса çитерес пулат. Комсомолĕцсен мĕнпур масси, комсомолăн мĕнпур организацийĕсем пулăшнипе комсомол ĕçне тата ытларах çӳлĕ вырăна çĕклеме çак йăнăшсемпе çитменлĕхсене тӳрлетессине, хастарлăн та татăклăн тӳрлетессине пирĕн партин Тĕп Комитечĕ шансах тăрат. (Алă çупассĕ).

Епĕ комсомол массисене идейăпа политикă тĕлĕшĕнчен вĕрентес ыйту çинчен каласшăн. Факт ĕнтĕ, политикăлă вĕренӳ тĕлĕшпе комсомолра ĕççем чылай начар тăраççĕ. Кунта шавлани нумайха, ĕçе тунă пек кăтартасси, тĕплĕн ĕçлемени нумай-ха. Çав вăхăтрах, йулташсем, теори мĕнле вырăн йышăнса тăнине çителĕклĕ хакламанни тата пирĕн кадрсем теори тĕлĕшĕнчен кайа йулни мĕн патне илсе пынине халĕ ĕнтĕ кашни курса тăрат.

Партипе комсомолăн задачи кашни комсомолĕца идейă тĕлĕшĕнчен çирĕпленсе çитнĕ, политикăлă тата практикăлă ыйтусене пĕлсе ăнланма пултаракан бойец туса вĕрентсе çитĕнтересси пулса тăрат.

Комсомолăн обйазаннăçĕ çакăнта пулат: комсомол умне Владимир Ильич Ленин лартнă задача—коммунисăма вĕренмеле!—тенĕ тĕп задача пурнăçа кĕртмеле, кашни активлă комсомолĕц марксисăм-ленинисăма вĕренсе çитмеле. Комсомол речĕсенче теорине йуратас туртăма чĕртсе йамала.

Есĕр пирĕн социалисăмла государствăн пулас руководительĕсем пулса тăратăр, сиртен пĕр пайĕ халех ĕнтĕ государствăлă ĕçĕн тĕрлĕ участкисен руководительĕсем пулса тăрат. Государствăлă, хуçалăхла, кооперативлă тата ытти тĕрлĕ ĕçсенче ĕçлекен комсомолăн йертсе пыракан кадрĕсен хисепĕ куллен кун ӳссе пырат.

Ку ĕнтĕ комсомола, тата чи пирвай унăн кадрĕсене, марксисла-ленинла теорине вĕренсе алла илес ĕçе чăннипех тытăнма хушат.

Пирĕн совет государстви хуçалăхпа культурăн пур отраçлисене те, çав шутрах йалхуçалăхне те, çул кăтартса парат. Марксисла-ленинла теорине тĕплĕн пĕлмесĕр, урăхла каласан, обшчĕствăлă аталанăвăн саккунĕсене, рабочисен йухăмĕн саккунĕсене, социалисăмлă революци саккунĕсене пĕлмесĕр тата теорипе революцилĕ практикăлă ĕçре усă курма пĕлмесĕр çавăн пек государствăна йертсе пыма çук.

Пире Сталин йулташ вĕрентнĕ пек, йертсе пырасси вĕт вăл—таврара мĕн пулса пынине курма кăна мар, пулса пыракан ĕçсене çырса пыма кăна мар, тата малашнехине курма пĕлнине те, урăхла каласан, ĕçсем хальхи вăхăтра мĕнле тăнине кăна мар, тата вĕсен аталануне малтанах курса тăма пĕлнине те, вĕсем ăçтала ӳсессине ăнланма пĕлнине те пĕлтерет.

Аталану саккунĕсене пĕлмесĕр малашнехине курса тăма май çук. Практикă, ăна теорипе çутатса тăмасан, суккăр пулат. Теорине мăнса кайни, ăна тивĕçлипе хакламанни—мĕнле пысăк сийен кӳни çинчен пирĕн кĕрешӳпе ĕçсен пĕтĕм опычĕ каласа парат. Кадрсен пĕр паллă пайне, политикăра писĕхменскере тата теорине пĕлменскере, тăшманла елементсем буксир çине илнĕ те вĕсене фашисла разведкăсен тата вĕсен троцкисла-бухаринла, буржуалă-националисла агентурин çимĕçĕсем туса хунă.

Çак урока пирĕн нихăçан та манмала мар. Унтан пур кирлĕ уроксене те тумала.

Комсомол кадрĕсене идейă тĕлĕшĕнчен çирĕплетни, теори тĕлĕшĕнчен вĕрентни рабочисен, колхозниксен тата совет интеллигенцин çамрăк ăруне коммунисла вĕрентсе ӳстерес ĕçри комсомолăн практикăлă задачисене пурне те ăнăçлăн пурнăçа кĕртме пулăшĕ.

Сталин йулташ ПСК(б) Парти Тĕпкомĕн феврал-мартри пленумĕнче çапла каларĕ: епĕр хамăр кадрсене идеологи тĕлĕшĕнчен хатĕрлеме тата вĕсене политикă тĕлĕшĕнчен писĕхтерме пултарсан, вĕсене çĕршыва йертсе пырас ыйтусене пысăк мар йăнăшсемсĕр татса пама пултаракан пĕтĕмĕшпех ӳссе çитнĕ ленинĕцмарксиссем тума пултарсан, çавăнпа вара епĕр пирĕн мĕнпур задачăсен $^{9}/_{10}$ пайне татса панă пулăттăмăр. Ака мĕншĕн ĕнтĕ большевисăма вĕренсе алла илер—тенĕ лозунга пирĕн лозунгран чăн-чăнах пурнăçа кĕнĕ ĕç туса хумала. Ку вăл—комсомолĕцсен пурнăçла тата пирвайхи черетре тăракан задачи. Хăшпĕр кадрсене, çав шутрах комсомол кадрĕсене те, шăпах ĕнтĕ вĕсем теорипе политикă тĕлĕшĕнчен кайа йулнă пирки, тăшмансем хăйсен танатисем ăшне сĕтĕрсе кĕртме пултарнă.

Пирĕн çынсем пурте мар хăйсен хакне пĕлеççĕ тата вĕсем пур чухне те мар тăшмансен чăн-чăн хакне пĕлеççĕ. Малта пыракан революцилĕ теори пулса тăракан теорине—марксисăм-ленинисăма вĕренсе алла илни пирĕн практиксене хăйсен ĕçĕсенче никам аркатайми вăй тата шанчăк парат. Большевисăма вĕренсе алла илни пирĕн кадрсене вĕсене истори мĕнле çӳлĕ вырăна лартнине ăнланса илме пулăшат. Вĕсем совет гражданинĕн, совет работникĕн аслă тивĕçлĕхĕпе хисепне ăнланса, туйса илĕç. Вĕсем хăйсен хакне тата пирĕн тăшмансен чăн-чăн хакне пĕлсе тăрĕç, çав мĕнпур фашисла-белогвардейĕцла ирсĕрсем—вĕт вĕсем совет комсомолĕн атă тĕпĕ тĕшне те тăманнине ăнланса илĕç! (Алă çупассĕ).

Йулташсем, ку тĕлĕшпе пирĕн кадрсене питĕ паха кĕнеке калама çук пысăк усă кӳрĕ,—епĕ „Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (большевиксен) Парти историн Кĕске курсне" илсе калатăп. Çав пит те паха кĕнекере марксисăм-ленинисăм вĕрентĕвĕн тĕп положенисене пĕрлештерсе, çав тери уççăн ăнланмала каласа панă. „ПСК(б)П историн Кĕске курсĕ" марксисăм-ленинисăм вĕрентĕвĕн тĕп пĕлĕвĕсене паракан чăн-чăн енциклопеди пулса тăрат.

Партин Тĕп Комитечĕ тата Сталин йулташ хăй, пирĕн кадрсене идейă тĕлĕшĕнчен хĕçпăшалланма пулăшас тесе, парти аллине, комсомол, ĕçсыннисен аллине большевисăмăн çак çĕнĕ хăватлă идейăлă хĕçпăшалне пачĕç.

„ПСК(б)П историн Кĕске курсĕ" кашни партийĕцшĕн тата комсомолĕцшĕн чи кирлĕ те йуратакан кĕнеке пулса тăмала.

Пирĕн кашни комсомолĕцăн теорине йуратас кăмăлне чĕртсе йамала, тăрăшса ĕçлесен—теорине вĕренсе алла илме пулни çинчен кашни комсомолĕца ăнлантармала. Пирĕн нумайĕшĕ теорирен хăраççĕ. Ку çакăн пирки пулса пынă: пирĕн пропагандиссем нумайĕшĕ буквăсем, кĕнекере çырнисем тăрăх кăна, теорине пурнăçпа çыхăнтармасăр, теорине пурнăçран татса, ăнланмала мар вĕрентнĕ. Çав вăхăтрах, йулташсем, теорине вĕренсе алла илессинчи йăвăрлăхсем вĕсем—ăнăçлăнах çĕнтерсе илмеле йăвăрлăхсем пулса тăраççĕ. Сталин йулташ пире йаланах çапла вĕрентет,—тата ку вăл пирĕн тĕп правилă пулмала,—теорине вĕренсе алла илме йăвăр мар, умма лартнă ĕмĕте пурнăçа кĕртме кăмăл, пикенсех ĕçлени тата çирĕп характĕр пултăр кăна—вара теори сирĕн аллăрта.

Большевик, большевичкă, комсомолĕц, комсомолкă, вĕсен тивĕçлипех кăмăл пулсан, вĕсем алла илме пултарайман пĕлӳсем çук.

Комсомолра пропагандăпа идейăлă воспитани ĕçне халиччен тĕрĕс мар организациленĕ пулнă. Вĕренӳ пахалăхне лайăхлатас вырăнне кружоксем ытларах тума тăрăшнă. Политикăлă вĕрентес ĕçĕн тĕп метăчĕ çинчен, большевиксен ватă ăрăвĕн опычĕпе тĕрĕсленнĕ метăчĕ, — политикăна кашни хăй тĕллĕн вĕренес метăд çинчен манса, пурне те кружоксене кĕртме хăтланнă. Çынсем хăйсен вăйĕсем çине шанассине, теорине кружоксен тулашĕнче, хăйсем тĕллĕн вĕренес шанăçне пĕтерне. Тĕрлĕрен кружоксене сахал пĕлекен пропагандиссен кадрĕсемпе тултарнă, çав кадрсем час-часах марксисăм-ленинисăмăн тĕп положенисене пăснă, тĕрĕс мар ăнлантарнă, çавна пула вара хăйсен вĕренекенĕсене арпаштарма çеç пултарнă.

Пропагандă ĕçĕнче комсомол пысăк çаврăну тумала, вăл вĕренӳ пахалăхне лайăхлатас, комсомолĕцсем кĕнекепе хăйсем тĕллĕн ĕçлеме вĕренес, пропагандă ĕçĕнче пичетпе сарлакан усă курас ĕçе тĕп вырăна хумала. Кашни комсомолĕцăн, вăл кружок тулашĕнче те, химине, чи йăвăр математикăна, биологине тата ыт. наукăсене те вĕренсе алла илме пултарнă пекех, марксисăм-ленинисăма та вĕренсе алла илме пултарас шанчăкне çĕнĕрен чĕртмеле. Кружоксен шутне чакармала, идейăлă воспитани парас ĕçре комсомолĕцсем марксисла-ленинла кĕнекесене хăйсем тĕллĕн вĕренес тĕп метăда çĕнĕрен чĕртмеле. Партипе комсомол, марксисăм-ленинисăма вĕренекен комсомолĕцсене лайăх консультацисем парса, марксисла-ленинла литература каларса, вĕренӳ вăхăтĕнче пулакан ыйтусем çине ответсем парса, лекцисем туса тата ыт. те пулăшса пырĕç.

Кашни активиса, вăл марксисăм-ленинисăм никĕсĕсене хăй тĕллĕнех вĕренсе алла илме пултарас шанчăк памала, ун чухне вара комсомолăн идейăлă воспитани ĕçĕ хăвăрт малала кайĕ.

Йулташсем, комсомол кадрĕсене теорилĕ тата политикăлă хатĕрлес задачăсемпе çыхăнтарса, епĕ комсомол интеллигенцин ролĕ çинчен пĕр-ик сăмах каласшăн.

Комсомол кадрĕсем пирĕн совет интеллигенцин пит пысăк пайĕ пулса тăраççĕ. Совет интеллигенцин пит пысăк çарĕ парти, государствă, профсойуз, комсомол аппарачĕн кадрĕсем, пирĕн çарпа флот кадрĕсем, пирĕн учрежденисенче ĕçлекенсем, учительсем, врачсем, агрономсем, суту-илу тата коопераци работникĕсем, çавăн пекех тата çав ĕçре ĕçлеме шкулсенче хатĕрлекен пирĕн вĕренекен çамрăксем пулса тăраççĕ. Ку вăл пĕтĕмпех çĕнĕ интеллигенци, çавăн пек интеллигенци тĕнчере урăх пĕр çĕршывра та çук. Вĕсем—командăлă вырăнсене çĕкленнĕ ĕнерхи рабочисемпе хресченсем тата рабочисемпе хресченсен ывăлĕсем. Хамăрăн интеллигенцисĕр епĕр государствăна ăнăçлăн тытса пыраймастпăр. Рабочи клас хăйĕн шалти тата тулти политикине ун урлă туса пырат.

Сылăха пытарма кирлĕ мар, комсомолра (комсомолра кăна та мар) интеллигенци çине кивĕле, Ленина хирĕçле, тĕпренех тĕрĕс мар пăхас шухăш саралнă пулнă. Çав тĕрĕс мар шухăшсем служăшчисем, вĕренекенсем çине йĕрĕнсе пăхнинче, интеллигенци çине иккĕмĕш суртлă пек çынсем çине: ку çынсем саватра писĕхмен, вĕсен аллисем хăпарса тухман, тесе пăхса, интеллигенци хушшинче идейăлă-политикăлă ĕçе тивĕçлĕ хакламаннинче палăрса тăнă. Ĕнерхи стахановĕц çинчен, халăх ретне кĕрсе предприйати директăрĕ йе инженер пулнă çын çинчен рабочисенчен „татăлса кайнă" çын тесе калаçаççĕ. Пирĕн аслă шкулсенче рабочисемпе хресченсен ачисем вĕренеççĕ пулин те унта вĕренекенсем çине те çителĕклĕ хака хумасăр пăхаççĕ.

Интеллигенци çине çапла тискерле, тӳрремех хулиганла тата совет государствишĕн хăрушла пăхнине тĕппех пĕтерес пулат.

Совет интеллигенцине марксисăм-ленинисăма пĕлнипе хĕçпăшаллантарас пулат. Çакăнсăр практикăлă ĕçе ăнланулăн илсе пыма çук. Кам та кам хăйĕн ĕçне социалисăм строительствин пĕтĕмĕшле задачисемпе çыхăнтарма пĕлмест,—вăл ĕçе ăçтала илсе пымалине пĕлмест, суккăрпа пĕрех ĕçлет.

Ака мĕншĕн ĕнтĕ комсомолăн хăйĕн тимлĕхне совет интеллигенцийĕ йенне çавăрмала. Ку ĕнтĕ комсомол рабочисемпе хресченсен çамрăкĕсем çине тимлĕн пăхассине вăйсăрлатмала тенине пĕлтермест. Анчах ку вăл комсомолăн совет интеллигенцийĕ, служăшчисем тата вĕренекен çамрăксем хушшинче идейăлă-политикăлă тата организацилĕ ĕçе сарса йамалине пĕлтерет, ку таранччен вăл çак тĕлĕшпе пит те çителĕксĕр ĕçленĕ пулнă.

Интеллигенци çинчен пирĕн аталанăвăн малашлăхĕ йенчен илсе калас пулсан, пирĕн задача—мĕнпур рабочисемпе хресченсене образовани илнĕ çынсем тăвасси пулат. Нумай та мар çулсем иртĕç, вара çичĕ çуллăх образовани пĕтĕм халăхăн достойанийĕ пулĕ.

Пĕлӳве, образованине социалисăмлă çĕршывра пит çӳле хурса хакламала.

Апла пулсан, комсомол ĕçĕнче комсомол кадрĕсене идейăпа политикă тĕлĕшĕнчен вĕрентсе писĕхтерес ыйтусем малти плана тухса тăраççĕ. Большевисăма вĕренсе ала илни, техникăна алла илес задачăна халичченхинчен ăнăçлăрах пурнăçа кĕртсе пыма май парат. Техникăна алла илнĕ кадрсем пирĕн çитмеççĕ-ха. Опытла кадрсем çителĕксĕр пирки хамăрăн малти вырăнта тăракан техникăран, пирĕн чи лайăх хапрăксемпе саватсенчен вĕсем мĕн пама пултарнине пурне те сăрхăнтарса илейместпĕр-ха епĕр. Есĕр хăвăр та маиран начар мар пĕлетĕр ĕнтĕ, пирĕн промышленнăçăн чылай отраçлĕсенче инженерсемпе техниксене кăнтăрла хăй çутипе шырамала. Илес, сăмахран, полиграфи промышленнăçне, унта шултра предприйатисенче ĕçлекен

(Йулашки 3-мĕш страницăра).

А. А. Жданăв йулташ сăмахĕ

(ЙУЛАШКИ)

3—4 пин рабочи хушшинче инженерсем тата техниксем темиçе çын кăна хисепленеççĕ.

Техникăна алла илнĕ кадрсене хатĕрлес задачă, хуçалăхăн тата културăн мĕнпур отраçлисенчи специалиссене хатĕрлес задачă пирĕн чи пысăк задачăсенчен пĕри пулса йулат̆. Индусри, шултра социалисăмлă çĕрĕçĕ аталанни техникăна пит тĕплĕн вĕренсе алла илнĕ çĕнĕ кадрсене ыйтат̆, комсомолăн ĕнтĕ çак задачăна ăнăçлăн татса пама партине пулăшмала.

Комсомолăн малта пыракан наукăн çыннисене сарлакан та хăйулăн хатĕрлесе ĕçе лартса пымала. Сталин йулташ Кремљре аслă шкулсен работникĕсене йышăннă чухне каланă сăмахра: наукăн малашлăхĕ наукăри çамрăксен аллинче, тесе кăтартса панă. Наукăн çӳллĕшĕсене алла илмеле, рутинерсем мар, новатăрсем, наукăра кивелнĕ традицисене çĕмĕрме тата наукăна малала йама пултаракан çынсем пулмала—акă çамрăксен задачи. Çакна тума наукă пĕлĕвĕсен çӳллĕшĕсене алла илмеле. Комсомолăн пур йенпе те ĕçе çапла туса пымала: пĕр-ик çултан комсомол хамăрăн аннене—тăван çĕршыва панă парнесен хисепĕнче марксисăм-ленинисăм тăрăх çырнă теорилĕ кĕнекесем, пит пысăк квалификацилĕ наукăла тата пропагандисла кадрсем те пулччĕр. Халĕ çавăн пек парнесем çинчен илтĕнмест-ха. Марксисла-ленинла теорине пĕлекен çавăн пек наукă работникĕсене комсомолăн вĕрентсе хатĕрлемеле. Халĕ комсомолăн ку ĕç вăйсăр-ха.

Пĕр-ик сăмах комсомолăн шалти организацилĕ задачисем çинчен.

Комсомолăн хăйĕн пур членĕсене те тата çамрăксен массисене те организацилĕхпе дисциплинăн никĕсĕсене ку таринччен тунинчен виçме çук ытларах хăвăхтарса пымала. Çак качĕствăсем комсомол организацийĕсен нумайĕшĕн çитмеççĕ-ха. Комсомол хуçалăхĕ тĕлĕшпе йапăхлăх, организацилĕ çемçешкелĕх, дисциплинă çирĕп марри—комсомол организацийĕсенче нумайĕшĕнче халĕ те пур-ха.

Тăшманла елементсем комсомол работникĕсене морал тĕлĕшĕнчен пăсни урлă комсомола кĕрсе кайнă фактран тухса тăракан уроксене пĕтĕмĕшпе шута илмеле. Комсомол активĕн çамрăксен массипе тата тачăрах çыхăнмала. Комсомол активĕн хăйĕн пурнăçне, ку таранччен пулнă пек, массăсенчен уйрăмра тумала мар, ку таранччен активиссем çамрăксен массисен пурнăçĕнчен уйрăм, хутăрсенчи пекех пурăннă. Активиссен пĕр пайĕ çамрăксен массисем çине çавăн пек мăнкăмăллăулпутла пăхнине тĕп тумала, ун пек пăхакансене хăйсене тăрăшыв çине кăлармала.

Çамрăксен масси вожакĕ пулмала, комсомол активĕн çамрăксемпе пĕрле пурăнмала тата ĕçлемеле, унăн пурнăçĕнче, ĕçĕнче канăçĕнче, савăнăçĕнче, йăвăрлăхсенче, хуйхă-суйхă пулнă чухне тата савăнăç чухне те çамрăксен массисемпе пĕрле пулмала. Активăн çамрăксем пулакан çĕре пур çĕре те кĕмеле, вĕсене ывăнма пĕлмесĕр çутта кăларса тата организацилесе пымала.

Комсомолăн çакна астуса тăмала: коллективлă руководствă принципне пăснисем комсомолта ан пулччăр, ĕçри çитменлĕхсене бољшевикла критиклени тата самокритикă пурнăçа кĕмеле пултăр.

Активсен пĕр пайĕ критикăпа самокритикăн тути-масине туйми пулни—пит те хăрушă йапала. Вăл кадрсем хытса лараççи патне илсе пырат̆. А сирĕн умра хамăрăн мĕн пур ĕçе татти-сыпписĕр лайăхлатса пырас задачă тăрат̆. Сирĕн государствă аппаратне лайăхлатас задачăна пурнăçа кĕртмеле пулат̆,—совет аппаратĕнче çитменлĕхсем, бӳрократисăм, волокитă, жуљничĕствă, социалисăмлă харпăрлăх çине сăтăрла пăхнисем т. ыт. нумай-ха.

Сирĕн комсомолти кадрсене комсомолти йертсе пырас ĕçсене хăйулăрах лартса пымала, вĕсене хытса ларма памала мар. Пирĕн халĕ предприйатисен директăрĕсем пулса тата наукăпа вĕрентӳн пит пысăк заведенисен руководителĕсем пулса, промышлĕннăçăн тĕрлĕ отрăçлисен руководителĕсем пулса ĕçлекен 25—26 çулхи çынсем пур. Çак çамрăк çынсем ĕçе ăнăçлăнах алла илсе пыраççĕ. Ку факт çамрăксене ĕçе лартассинчен сирĕн нимĕн те хăрамала маррине кăтартат̆. Комсомолăн хăйĕн организацийĕнче çынсем пĕр вырăнта хытса ан ларччăр тесе мĕн кирлисене пурне те тумала, мĕншĕн тесен пĕр вырăнта хытса ларни çĕрсе кайасси патне илсе пырат̆. Комсомол кадрĕсем ĕçĕн пĕтĕм сыпăкĕсене — кĕçĕн йачейкăран пуçласа Обком, комсомолăн Тĕп Комитечĕ т. ыт. таран мĕн чухлĕ хăвăртрах утса тухаççĕ, партин ĕçне тата государствă ĕçне йертсе пыма çамрăк работниксене, бољшевикла вăй-хăватпа тата çулăмлăхпа туллискерсене, лартмали резервсем çавăн чухлĕ хăвăрт ӳсеççĕ, ӳсе пыракан комсомолĕцсене партине илмели майсем çавăн чухлĕ нумай пулаççĕ.

Вăтăр çула та çитмен „вăтă" комсомолĕцсем çирĕм—çирĕм икĕ çулхисем çине пĕчĕк ачасем çине пăхнă пек пăхма пуçлакан сийенлĕ йăлана çĕнтерес пулат̆.

Илĕр тĕслĕхшĕн бољшевиксен вăтă гвардине. Бољшевиксен вăтă гвардийĕн представителĕсем 19—20 çулта чухнех ĕнтĕ партин пит те пысăк ĕçне туса пынă. А сирĕн халĕ час-часах çирĕм çулхи çамрăк çынсене сар тутлă чĕпĕсем вырăнне хураççĕ, вĕсене партине йамаççĕ. Ку вăл пит те тĕрĕс мар туни пулат̆. Пирĕн çамрăк çынсем государствă управленинче, хуçалăха йертсе пырас т. ыт. пит ответлă ĕçсене ăнăçлă туса пыма пултарасси пирки нимĕнле иккеленӳ те çук.

Хĕрсем хушшинчи ĕçе çĕклемеле. Ку ĕç пит те вăйсăр-ха. Комсомолăн хăшпĕр сийĕсем хушшинче хĕрсене ĕçе лартасси çине тӳрремех тĕрĕс мар пăхни пур. Епĕ çапла шутлатăп,—халĕ ĕнтĕ, Гризодубăвă, Осипенко тата Расковă йулташсем пит те чаплă геройла вĕçев тунă хыççăн, вĕсен вĕçевĕ практикă йенчен анчах мар, тата принцип йенчен те политикăлă пысăк вырăнта тăрат̆,—халĕ, çак пример хыççăн, пирĕн хĕрсене малала кайма çăмăлрах пулĕ. Хĕрсем комсомолра пысăк вăй. Комсомол организацисен çак вăйа пытарăннипех усрамала мар, комсомол ĕçĕн пур облăçĕсенче те хĕрсене хăйсене палăртма май памала.

Йулашкинчен, епĕ комсомолăн чи пирвайхи обйазаннăçĕ çинчен—вăл ССР Сойузĕн оборонине тĕреклетес ĕçе хутшăнасси çинчен астутарса каласшăн.

Йулташсем, ССР Сойузĕн оборонине тĕреклетме кирли тата вăл пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен тĕнчери пĕтĕм обстановкă калат̆. Тĕнчене çĕнĕрен тепĕр хут валеçес пирки агрессивлă фашисла государствăсем пуçласа йанă иккĕмĕш империалисăмлă вăрçă ĕнтĕ йалкăшса кайрĕ. Çак вăрçăра агрессивлă государствăсене демократилĕ „аслă" çĕршывсем текенскерсем хăйсене хăйсем капитуљантла тыткаланипе пулăшаççĕ, вĕсем хăйсен политикипе пĕр позици хыççăн тепĕр позицине парса, фашисăма çул уçса параççĕ. Тĕнчери хутшăнусен кун йĕркине фашисла атта лартнă, пирĕн ĕнтĕ çакăнтан пур практикăлă вывăдсене те тумала. Тĕнчери правă нормисем тата хутшăнусем хут татăкĕ пулса йулакан, вĕсене чăрсăрăн таптанă самантра—пирĕн уйрăмăнах вăйлă пулмала. Совет государствин çар хăвачĕ вăл ССР Сойузĕ çине тулашран тапăнассинчен гарантилекен чи вăйлă хăват пулса тăрат̆. Хасан событисем тата Хасан патĕнче Йапони самурайĕсене хирĕç çапăçнă чухнехи пирĕн даљневосточниксен геройла ĕçĕсем вăл тĕлĕшрен уйрăмах вĕрентӳлĕ. Совет государствин тăшманĕсене ирĕксĕрленĕ никĕс çинче итлеттерни усăсăр маррине вĕсем тата тепĕр хут аса илтереççĕ. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Йапони самурайĕсем Совет Сойузĕ пит те вăйлă çĕршыв иккенне курса ĕненме пур майсемпе те тăрăшрĕç. Пирĕн çав вĕрентӳлĕ урока вĕсене памаллах пулчĕ. Çакăнпала епĕр Совет Сойузĕпе вăрçă вăрçасшăн тăракансене пурне те: вĕсем пирĕн çине вăл йе ку йенчен тăрăнсан, кашнинчех çавăн пек уроксем пулаççĕ, тесе асăрхаттартăмăр. (Алă çупаççĕ).

Пирĕн чикĕсем çине тăрăнас тата пирĕн вăйсене хыпашласа пăхас йăлана йаланлăхах пĕтерсе хума хамăрăн çара флота тата авиацине малала тĕреклетессишĕн пирĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшмала. Пирĕн малала та чи малти вырăнта тăракан çар, чи малти вырăнта тăракан артиллери, чи малти вырăнта тăракан авиаци тата тинĕс-çар флочĕ пулмала. Пирĕн пуринчен те инçерехе тата лайăхрах пемеле, пирĕн пуринчен те инçерех, çӳлерех тата хăвăртрах вĕçмеле. Çак задачăна пурнăçа кĕртес çĕрте комсомол пит те пысăк вырăн йышăнса тăрĕ. Пирĕн çарпа флота оборонăн чи çĕнĕ хатĕрĕсемпе хĕçпăшаллантарас тата вăрçă техникине алла илес задача комсомол ăнăçлă татса парасси пирки нимĕнле иккĕленӳ те çук. (Алă çупаççĕ).

Йулташсем, социалисăма çирĕплетес, пирĕн аслă тăван çĕршывăн вăй-хăватне тĕреклетес тĕлĕшпе Ленинла Комсомолăн йăвăр та чаплă ĕçĕнче малала çитĕнӳсем туса пыма ăна ыра сунма мана ирĕк парăр.

Комсомолĕцсемпе комсомолкă йулташсем! Марксисăм-ленинисăм вĕрентĕвне алла илĕр, коммунисăма тата çирĕпрех вĕренĕр, пĕлӳсемпе хĕçпăшалланăр, хăвăра тата хамăрăн çамрăксене партийе, тăван çĕршыва, Сталин йулташа вĕçĕмсĕр йуратма вĕрентĕр. (Алă çупаççĕ).

Тăшмансене хăрушлăх кӳме тата хамăрăн тăван çĕршыва савăнăç кӳме,—сыва пулччăр та çирĕпленсе пыччăр совет çамрăкĕсем!

Сывă пултăр пирĕн чаплă пилĕк мĕлйунлă комсомол ăрăвĕ!

Сывă пултăр бољшевиксен партти тата Ленин ĕçне малала илсе пыракан аслă Сталин йулташ! (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

МТ Станцинчи строителствă

Машинă-трактăрлă станцисенче, уйрăмах çĕннисенче, тумалисем питех те нумай. Машинă сарайĕсем, гаражсем, складсем, пӳрт-çуртсем т. ыт. те тумала. Хăвăртрах, лайăхрах тата йӳнĕрех тăвас тесен, материалсене хĕлле хатĕрлесе хумала. Çура тухсан, çĕр-шыв типсен çийĕнчех строителствăна тытăнмала. Вара уй-хирте хĕрӳ ĕç пуçланса кайиччен нумайăшне туса пĕтерме пулат̆.

Анчах халĕ йăлтах урăхла пулса пырат̆. Çăва тухсан тин йăвăç хатĕрлеме лекет, мĕншĕн тесен хĕл кунĕсенче хатĕрлеме укçа-тенкĕ çук. Çуна çулĕпе йăвăç кăлармаçăмăлли те çăмăлтарах, турттарма та йӳнĕрех ларат̆. Тепĕр йенчен, çура тухсан çийĕнчех пуртă ил те чутлама тытăн. Мĕн каласси пур, ĕç пит те кал-кал пымала.

Пĕр пример. Кăçал çент̆абĕр уйăхĕ пĕтнĕ тĕле Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнчен çакăн пек телеграммă илетпĕр: „Халех çĕнĕ сарай тума тытăнăр. Кирлĕ таран укçа-тенкĕ паратпăр". Пирĕн Ишлей МТС-че мĕн пурĕ те пĕр сарай çеç. Çав халь асăннă телеграммă хыççăн, епĕр тӳрех йăвăç ширама тапратрăмăр. Госплан пулăшнипе вăрман тупрăмăр. Анчах Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ çийĕнчех укçа параймарĕ. Кĕрхи çăмăрсем пуçланчĕç. Çулсем пăсăлса кайрĕç. Çапла вара йăвăç кăларма икĕ хак ларчĕ. Пĕр Атăл урлă каçарса пăрахма кăна икĕ пин тенкĕ ытларах тăрат̆. Хĕлле пулсан, çав расхут çук вĕт.

Вывăд çапла: йăвăçа т. ыт. материалсене мĕнле пулсан та çуна çулĕпе хатĕрлесе хумала. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ Ишлей машинă-трактăрлă станцие вањњи çитес çул машинă сарайĕ, гараж, склад, конторă, тăватă хватерлĕ çурт, бензин усрамали нӳхреп тата çăл тума палăртат̆. Вĕсене вањњи сахал мар йăвăç кирлĕ. Вăрман хатĕрлеме хаљ тытăнмала. Пĕр тăрук укçа пама май çук, тейĕпĕр. Апла пулсан, пĕр пайне, вăрман илсе хатĕрлеме кирлине, декабĕр уйăхĕнче, тепĕр пайне, вăрман турттарса тухма кирлине, йанварпе феврал уйăхĕсенче, ыттине кайарахпа памала.

Строителствăна тивекен тепĕр ыйту. Сметă тунă чух планпа пăхнă хаксене лартаççĕ, анчах материалĕсене планпа пăхнине памаççĕ. Хăмашăн 50 тенкĕ ытларах тӳлес вырăнне аласта ертелĕсене 100 тенкĕ, кирпĕчшĕн 72 тенкĕ тӳлес вырăнне 200 тенкĕ тӳлеме лекет. Ку каллех строителствăна хаклантарасси патне илсе пырат̆. Мĕнрен килет вăл? Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнчен килет. Вăл фондсем илме, вăхăтра зайавкăсем пама тăрăшмаст̆. Сăмахран, иртнĕ çулта вăл вăрман пирки Госплана нимĕнле зайавкă та паман. Çавна пула кашни директăр хăй пĕлнĕ пек вăрман шырат̆, хăй пĕлнĕ пек çуртсем тăват̆. Сăмах майĕпе каласан, Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ йенчен техникă тĕлĕшпе йертсе пыни те çук.

Йулашкинчен çакна каламала. Нумай МТС-че мастерскойĕсем йĕркелĕ мар. Ишлейре мастерскойа виçĕ трактăр кĕртсе лартсан пушă вырăн та йулмаст̆. Йалхуçалăх машинĕсене тултах йусама тивет. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ те мастерскойсем çине çителĕклĕ çавăрăнса пăхмаст̆. Ытларах тимлеттересчĕ, мастерскойсене часрах йĕркене кĕртсе çитересчĕ.

П. Иванов.

Ишлей МТС директăрĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Кружок партилĕ пропагандăн тĕп форми мар

Партири тата партире мар бољшевиксем, „пĕтĕм совет интеллигенцийĕ ПСК(б)П историн Кĕске курсне пысăк интереспа вулаççĕ, парти çинчен ленинла-сталинла вĕрентнине, обществă аталанăвĕн саккунĕсене, бољшевисăмăн стратегипе тактикине вĕренеççĕ. ПСК(б)П историйĕ политикăла тавракурăма хăпартат̆, халăх тăшманĕсене хирĕç хайаррăн кĕрешме вĕрентет, ревољуцилĕ сыхăлăха çӳле çĕклет.

ПСК(б)П историйĕ партири тата партире тăман бољшевиксене, интеллигентсене ревољуцилĕ теорийе, марксисăм-ленинисăма харпăрхăй тĕллĕн тĕплĕн те тарăнăн вĕренме пит лайăх услови туса пачĕ.

ПСК(б)П историне, марксисăм-ленинисăмăн ревољуцилĕ теорине кивĕ майсемпе, коммуниссемпе комсомолĕцсене „100 процентчĕпех" хутшăнтарнă кружоксенче тĕплĕн те тарăнăн вĕренме май çук. Кружоксене пурне те вĕренме хутшăнтарасси тесе çеç тăрăшни, кружоксене партилĕ пропагандăн тĕп форми туса хуни сийенлĕ. Вĕсем парти активне, интеллигенцине политикăлă воспитани парассипе, кадрсене идеологи тĕлĕшĕнчен вĕрентсе çирĕплетессипе нимĕн те çыхăнса тăмаççĕ. Кружоксем вĕренекенсен пултарулăхне пӳлсе тăнă. Çынсем зањатисене нимĕн хатĕрленмесĕр пынă, пропагандис мĕн каланине итлесе ларнă, хăйсем вĕренекен темăна нимĕн ăнланмасăрах йе çийелтен çеç ăнланнипех килĕсене саланнă.

Кружоксенче парти историне тĕплĕн вĕренме май çукки çинчен калакан фактсем темĕн чухлех. Çапла, ЧАССР Финанс Халăх Комиссариачĕ çумĕнче парти историне вĕренмели кружок 1936 çултан пуçласа 1938 çулти ийуњ уйăхне çитиччен „ĕçленĕ". Анчах çак кружокра „вĕренекенсем" 3 çул хушшинче те 1905 çулхи ревољуци тĕлне çитсен вĕренме пăрахнă.

Иртнĕ вăхăтра парторганизаци кружоксем нумай тунă, тата вĕсенче вĕренме коммуниссене пурне те хутшăнтарнă пулсан, çав организацине чи малта пыраканни тесе шутланă. Кружокăн ĕçĕ мĕнлипе, унта çыраннисем мĕнле вĕренипе никам та интересленмен. Кружоксем пулччăр, унта çыраннисен хисепĕ нумай пултăр, вара çитет, тесе шутланă парткомсемпе вĕсен руководителĕсем нумайĕшĕ.

Учебник тăрăх, марксисăм-ленинисăм классикĕсен произведенийĕсемпе харпăрхăй тĕллĕн çине тăрса вĕренессине тĕп вырăна хумала. Коммуниссене, партире тăман бољшевиксене, пĕтĕм совет интеллигенцине бољшевисăмпа хĕçпăшаллантарас ĕçре çакă тĕп вырăнта пулмала. ПСК(б)П историн учебникĕ çакнашал кĕнекесенчен пĕри пулса тăрат̆. Марксисăм-ленинисăмăн ревољуцилĕ теорине вĕренме Маркс, Енгĕлс, Ленин, Сталин çырнă кĕнекесене çине тăрса вуламала. Коммунис... интеллигент Марксӑн „Капиталне", Ленинăн, Сталинăн паллă произведенисене вуласа ăнланма вăй çитерет, çине тăрса тăрăшни, вулама вăхăт тупма пĕлни çеç кирлĕ.

Çак чăнлăха ăнланман йулташсем халĕ те кружоксем хыççăн хăвалама йуратаççĕ. Вĕсем алла кĕнеке, кранташ, тетрат̆ тытса тĕплĕн вĕренесси çинчен шутламаççĕ. Çапла, Куславкка районĕнчи Йелчĕкри парторганизаци ПСК(б)П Историне вĕренме кружок тунă, унта организацири пур коммуниссене те çырса тухнă. Мĕнле ĕçлет-ха çак кружок? Октабĕрĕн 13-мĕшĕнче пулнă зањатине пĕри те хатĕрленсе пыман, пропагандис Коњков йулташ хăй те итлекенсене йĕркелĕн ăнлантарса пама пултарайман. Çакăн пекех Шăхасан районĕнче те кружоксем шăтса ӳсеççĕ, анчах вĕсенче пĕринче те парти историне йĕркелĕ вĕренни çук. Кружока çӳрекенсем пропагандис мĕн каласса кĕтсе лараççĕ. Хăйсем нимĕн те вуламаççĕ. Çакă ĕнтĕ коммуниссене, интеллигенцине кĕнеке вулама хăнăхтарассине чăрмантарни, вĕсене хаклă вăхăта усăсăр иртерме вĕрентни пулат̆. Çакнашкал сийенлĕ практикăна хирĕç татăклăн кĕрешмеле. Парторганизацисен ПСК(б)П историне вĕренме кашни коммуниса, кашни интеллигента пулăшмала.

Кружока партилĕ пропагандăн тĕп форми вырăнне хунине, коммуниссене, комсомолĕцсене интеллигенцине бољшевисăма алла илме чăрмантаракан йĕркене тĕп тăвас пулат̆.

Инструктăр ĕçĕ —хисеплĕ ĕç

Парти райкомĕ 1938 çулти апрел уйăхĕнче мана парти ĕçне куçарчĕ. Унччен епĕ йалсовет председателĕнче ĕçленĕччĕ.

Епĕ ĕçлекен участкăра 8 йалсовечĕ тата 18 колхоз. Инструктăр пулса ĕçлеме тытăннă чухне участкăра 3 коммунис тата 78 комсомолĕц пулнă. Мана чи малтан комсомолĕцсемпе партире тăман актив хушшинче çине тăрса ĕçлеме тиврĕ. Пур йалсенче те кулленхи политикă кружокĕсем организацилерĕмĕр.

Колхозра ĕçленĕ чухне, вĕреннĕ вăхăтра социалисăмлă уйхирсенчи чи лайăх стахановĕцсем, обшчĕствăлă ĕçре активлă ĕçлекенсем палăрчĕç. Вĕсене парти ретне илме тивĕçлĕ. Çакна шута илсе, епĕ активиссем хушшинче тата ытларах çине тăрса ĕçлеме тытăнтăм, каласусем туса ирттертĕм, политикăлă пĕлӳсене хăпартма пулăшрăм. Манăн ĕç усăсăр пулмарĕ. Халĕ епĕ ĕçлекен участкăра коммуниссем 22 çынна, комсомолĕцсем 207 çынна çитрĕç. Çакăн хыççăн епĕ коммуниссене ПСК(б)П историн Кĕске курсне тĕплĕн вĕренме пулăшасси хамăн тĕп задачăсенчен пĕри тесе, шутлатăп.

Ĕçре хăйсен пултарулăхне кăтартнă йулташсене йертсе пыракан вырăнсене лартасси те инструктăрсен ĕçĕнче пысăк вырăнта тăмала. Епĕ çапла турăм та. Нăрваш-Шăхаљри коммунис Макарăв йулташ йалсовет председателĕнче ĕçленĕ чухне хăй лайăх ĕçлеме пултарнине кăтартрĕ. Çакăн хыççăн ăна райĕçтăвкомăн çулйĕр пайĕн пуçлăхĕ турĕç. Хирти Шăхаљри „Çĕнтерӳ" колхозра бригадир пулса ĕçленĕ коммунис Белков йулташ халĕ колхоз председателĕн замеçтителĕ пулса ĕçлет.

Выдвиженĕцсем хăйсене шанса панă ĕçсене йуратса туса пыраççĕ, унччен кайа йулнă ĕçсене мала кăлараççĕ. Çапла, Йурмин йулташа „Çĕнтерӳ" колхоз председателне суйласан, вăл нумай ĕçсем тăрăх кайа йулса пынă колхоза малти вырăнсенчен пĕрне йышăнтарчĕ. Колхоз клуб туса лартрĕ, радио кĕртрĕ, хуçалăхлă ĕçсен планĕсене тултарас тĕлĕшпе колхоз малти ретре пырат̆.

Колхозницă-стахановкă Фроловă йулташа партине илнĕ хыççăн, колхозниксем ăна колхоз председателне суйларĕç. Халĕ „Хĕрлĕ Именĕвă" колхоз районта малта пыракан колхозсенчен пĕри. Çакăн пекех Çеливанăв, Михайлăв, Кудрйашов, Чебуков йулташсем йертсе пыракан колхозсемпе йалсовечĕсем хăйсен ĕçĕсене нумай лайăхлатрĕç.

Партине çĕнĕрен илнĕ йулташсем пурте хăйсен политикăлă пĕлĕвне хăпартассишĕн тăрăшаççĕ. Вĕсем хаçат-журнал çыранса илсе вулаççĕ. Халĕ коммуниссем ПСК(б)П историне тĕплĕн вĕренме малтанлăха паллашаççĕ. Кунта та вĕсене инструктăр йенчен пысăк пулăшу кирлĕ.

Райком çекретарĕсем, уйрăмах пĕрремĕш çекретарĕ Волкăв йулташ, мана ĕçре пулăшаççĕ.

Епĕ хамăн ĕçе йуратат̆ăп. Инструктăрта ĕçлени мана хамăн политикăлă пĕлĕве ӳстерме пулăшат̆.

И. Чекушкин,

ПСК(б)П Турхан райкомĕн инструктăрĕ.

Йалти интеллигенцин бољшевисăма вĕренмеле

Шăхасан районĕнчи йалсенче интеллигентсем: учителсем, агрономсем, зоотехниксем, врачсем, акушеркăсем т. ыт. те 700 çын ытла.

Çак йалти интеллигенцине бољшевисăма вĕрентесси парти организацин хисеплĕ задачи пулат̆. Анчах ку ĕç Шăхасан районĕнче начар тăрат̆-ха. Кашни интеллигент ПСК(б)П историн Кĕске курсне харпăрхăй тĕллĕн вуласа вĕренме, Маркс, Енгĕлс, Ленин, Сталин произведенисене вулама пултарат̆. Çапла пулин те кунта парти пропагандин кивĕ меслечĕсенчен нийепле те уйăрăлмаççĕ.

Иртнĕ çулта учителсем хушшинче парти историне вĕренмели 12 кружок организациленĕ, вĕсенче пĕринче те йĕркелĕ вĕренни пулманнинчен кăçал та вывăд туман-ха. Кăçал та кружоксем хунаççĕ, вĕсенче халиччен нихăçан пропагандист пулман йулташсем вĕрентеççĕ. Çав кружоксенче вĕренӳ пахалăхĕ çуккине çак фактсенчен те лайăх курма пулат̆. Çапла. Шурчакассинчи кружока Йефремăв йулташ йертсе пырат̆. Кунта октабĕрĕн 13-мĕшĕнче ПСК(б)П историн Кĕске курсĕн 1-мĕш сыпăкне вуласа тухнă та, зањати пĕтнĕ тесе шутланă. Йефремăв хăй те учебнике çеç вуласа тухнă, Ленин, Сталин произведенисене вуламан. Вăрманйалти кружокра та çавăн пекех. Кружока пухăннă çынсем руководител Милитонăв йулташ мĕн каланине çеç итлесе ларнă. Хăйсем учебнике вуласа та тухман.

Кружоксенче çеç вĕренме шутлани тĕрĕс мар. Вăл учителсене харпăрхăй тĕллĕн вĕренме чăрмантарса пыни çеç пулат̆. Учителсене кружок кирлех мар, вĕсем пурте хăйсем тĕллĕн вĕренме пултараççĕ. Вĕсене вăхăт-вăхăтпа консуљтацисем памала, консуљтантсене парти райкомĕн уйăрмала.

Йалсовет çекретарĕсемпе председателĕсем 16 çын совет активĕн заочнă курсĕнче вĕренеççĕ. 28 çын парти йе комсомол организаци тунă тĕрлĕ кружоксене çыраннă. Кружоксенче вĕсем начар вĕренсе пыраççĕ, мĕншĕн тесен кружок руководителне шанаççĕ, хăйсем вĕренмеççĕ.

Йалсовет председателĕсемпе çекретарĕсен уйăхра пĕрре çеминар пулмала. Çеминарсем çулахи вăхăтра пулман. Халĕ парткабинет йалсовет работникĕсене кустсене пухса ПСК(б)П историпе консуљтацисем пама план тунă, анчах çак лайăх план пурнăçа кĕни курăнмаст̆-ха.

Агрономсем, зоотехниксем, медицинă работникĕсем, избачсемпе колхоз клубĕсен заведуйушчисем, трахработниксемпе финанс аппаратĕнче ĕçлекенсем мĕнле вĕреннине никам та пĕлмест.

Йалти интеллигенцишĕн Маркс, Енгĕлс, Ленин, Сталин произведенисене вуласа вĕренесси тĕп вырăнта пулмала.

С. Соколов.

Калчана выљăхсем йарса ваттарма йурамаст̆

Опытсем кăтартнă тăрăх, калчасем çинче выљăхсем тата хур-кăвакалсем çӳретни тырпул тухăçне питĕ нумай чакарат̆. Йĕпе вăхăтра калчасене выљăхсем урисемпе таптаса ватса пĕтереççĕ. Выљăх урисенчен лакăмланса йулнă вырăнсене çăмăр шывĕ тулса ларат̆ те, хĕлле шыв шăнса тăпра ăшне сывлăш кĕрейми туса лартат̆. Сурăхсемпе качакасем калчана тăпра çумĕнченех, калчан тунипе пучах пуçламĕшне те татса илеççĕ. Çакăн пек татса илнĕ калча тĕмисем вара пĕтеççĕ. Хурсем çӳретнĕ вырăнта сăнаса пăхнă хыççăн, калчасем пилĕк пайĕнчен пĕр пайĕ тупуçламăшĕ таталнипе ӳсме чарăнни курăнат̆. Калчасене хурсем тымарĕпе-мĕнĕпех кăкласа илеççĕ.

Вырăнсенчен пĕлтернĕ тăрăх, чылай йалсенче выљăхсене калчасем çине йури кăларса йараççĕ.

Акă, Елĕк районĕнчен Н. Курицов йалкор çапла çырса пĕлтерет: „Качалăв йалĕнчи „Труд" колхозра кĕр тырри калчисем çинче выљăхсем çӳретнипе калчана питĕ ватаççĕ. Уй хуралçисем хăйсен тĕллĕн чарса çитерейменççĕ. Колхоз председателе Ф. Çеменăв йулташăн выљăххисене кулленех калча çинчен тытса кĕреççĕ пулсан та, тепĕр ирхине каллех кăларса йарат̆".

Тури Йунтапа (Канаш р.) колхозĕнче те выљăхсене уйа кăларса йараççĕ. Колхоз председателĕ Константинăв йулташ хăйĕн ĕнине калча çине кăларса йарат̆. Енине уй хуралçисем тытса кĕрсен, вĕсене Константинăв темĕн те пĕр каласа вăрçат̆, тесе çырат̆ йалкор.

Районсенчи организацисем йенчен кĕр тырри калчисене лайăх пăхса усрассишĕн колхоз председателĕсемпе йалсоветсене кирлĕ кăтартусем паман.

Сывлăшра 32 сехет те 8 минут

Çамрăк аеронавтсен чаплă вĕçевĕ

Нойабĕрĕн 12-мĕшĕнче çамрăк вĕçевçĕсем—Голышĕвпа Неверăв комсомолĕцсем „СССР ВР-53“ аеростат çинче нумай вăхăт пынă вĕçеве ăнăçлăн иртерне. Аеростат калпăшĕ 600 кубла метр. Голышĕвпа Неверăв йулташсем сывлăшра 32 сехет те 08 минут пулнă. Вĕсем Оренбург облăçĕнчи Бугуруслан районĕнчи Ново-Городецкое йалĕ патне ăнăçлăн анса ларнă.

Голышĕвпа Неверăв йулташсем тĕнчере ку таранччен çакнашкал категорире тăракан аеростатпа нумай вăхăта вĕçниччен 2 сехет те 28 минут хушши ытларах вĕçнĕ.

(ТАСС).

— О —

Çĕнĕ кино фиљмсем

„Александр Невский“

Декабĕрĕн 1-мĕшĕнче „Александр Невский“ йатлă художĕствăлă, саслă çĕнĕ фиљм екран çине тухаť. Вăл фиљма искусствăн тава тивĕçлĕ дейатĕлĕ С. М. Ейзенштейн тата режиççор Д. И. Ваçилйĕв хатĕрленĕ.

Хаљ çак творчĕствăлă коллектив, „Александр Невский“ фиљма туса кăларакансемех, художĕствăлă „Перекоп“ йатлă историлĕ революцилĕ çĕнĕ фиљм хатĕрлеме тытăннă. Ку фиљма 1939 çулăн вĕçнеле хатĕрлесе çитерме палăртнă. „Перекоп“ фиљм Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ Крыма шуррисенчен тасатнă чухне паттăрăн кĕрешнине кăтартса параť. Çав фиљмра халăхăн мухтавлă полководĕцне Михаил Ваçилйĕвич Фрунзене кăтартаççĕ.

„Аслă уйав“

Кинохроникăн Мускаври студийĕ Октăбĕрти Социалисăмлă Аслă Революци 21 çул тултарнине Мускавра уйавлани çинчен „Аслă уйав“ йатлă саслă документлă фиљм хатĕрлесе çитернĕ. Фиљмра уйав кунĕнче Хĕрлĕ площĕтре пулса иртнĕ çав тери чаплă та тĕлĕнмеле çар парадĕнче ўкернĕ картинăсемпе Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн никам çĕнтерейми вăй-хăватне кăтартса панă. Çавăн пекех, демонстрантсен колоннисем мавзолей патĕнчен иртнине плљонкă çине çырса илнĕ.

Кинора Оборонă Халăх Комиссарне—Совет Сойузĕн Маршалне К. Й. Ворошилăв йулташа курма тата вăл аслă уйав кунĕнче калана сăмахсене илтме пултараççĕ.

Фиљма кинохроникăн Мускаври студинчи 14 оператăр ўкернĕ, пĕтĕмĕшпе С. Гурйĕвпа Н. Соловйов режиççорсем пухса хатĕрленĕ.

(ТАСС).

— ◆ —

150 пин беженцă

Официаллă сведенисем тăрăх, Германипе Полљшă оккупаци тунă районсенчен тарса тухнă беженцăсен хисепĕ 150 пин çынна çитнĕ. Вĕсем хушшинче—чехсем тата фашисăма курайман нимĕçсемпе полљаксем.

(ТАСС).

КĔРХИ ПЕЙЗАЖ



Вырăскас Пикшихри „Мотор“ колхозăн пĕви (Канаш р.).

Г. Костин фото-ўкерчĕкĕ.

Савăт тата унăн коллективĕ

Çĕмĕрле—Чăваш республикĕнчи промышлĕннăçла хула. Кунта йăвăç каскалакан комбинат, екстракт тăвакан „Бољшевик“, „Труженик“ тата ытти савăтсем ĕçлеççĕ. Икĕ вăтам шкул, икĕ хапрăксавăт шкулĕ тата туллимар вăтам шкул, рабфак, пуљницă, поликлиникă, клубсем, ачасен йаçли, ачасен сачĕ, мунча, темиçе çĕршер пурăнмали çуртсем. Комбинатпа „Бољшевик“ савăт кăна йулашки çулсем хушшинче икшер хутлă пурăнмали çуртсем 80 йахăн туса лартнă. Пурнăçпа йăла строитĕлстви çулран çул ўссе пыраť. Хулан чи айакри кĕтесĕсенче те електричĕствă çути йăлкăшаť.

Хулари предприйатисем туса кăларакан продукци Сойузри промышлĕннăçра, йалхуçалăхĕнче пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Çĕмĕрле хулин пурнăçĕнче „Бољшевик“ савăт пысăк вырăн йышăнса тăраť. Савăт хăйĕн вăйлă енергетикăлă хуçалăхĕпе ытти предприйатисене ĕçлеттерет кăна мар, вăл пĕтĕм хулана çутă параť. „Бољшевик“ савăт государствă планне йăланах тултарса пыраť. Вăл ĕçлеме тытăннăранпа продукци кăларассине пройектпа пăхнă пултарулăхран 40 процент ўстернĕ. Кăçал савăтра тата çĕнĕ, хаклă йышши екстракт—скумпи туса кăларакан цеха ĕçе кертнĕ. Ку цех кăларакан екстракт пир-авăр промышлĕннăçĕнчи чи кирлĕ продукци пулса тăраť.

Савăт ўснипе пĕрлех çынсем те ўсеççĕ. Савăтра стаханăвĕçсем 250 çын, ударниксем—178 çын шутланаççĕ. Малта пыракан стаханăвĕçсем: Наумăв, Шубенин, Лаптенăв, Спиридонăв, Володин, Никонорăв, Пойаркин, Çергейĕв, Дубровинă, Маркăвă, Закаљабин, Моторин т. ыт. йулташсем нормăна 150 процент таран тултарса пыраççĕ. Кочегарсем: Никифăрăв, Романăв, Идобайĕв йулташсем те çавăн пекех паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Кăçал лайăх ĕçлекенсене, стаханăвĕçсене чылайăшне хуçалăх тата техника ĕçĕнчи ответлă вырăнсене лартнă. Савăта килсе кĕнĕ чух хут сахал пĕлнĕ Горбунов йулташ халĕ çĕнĕ цех начаљникĕн помошникĕ пулса ĕçлет. Дежурнăй слесăрсем пулса ĕçленĕ Тараканăв, Миронăв, Романăв йулташсем сменă руководитĕлĕсем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсене шанса панă пысăк ĕçсене ăнăçлăн туса пыраççĕ. 2-мĕш бригадă (руководитĕлĕ Миронăв йулташ) йăланах плана 115 процент, Тараканăв йулташ йертсе пыракан 4-мĕш бригадă 103 процент тултарса ĕçлеççĕ.

Рабочисен пĕлўне инженерла-техникла работниксен пĕлў виçине çитерес лозунга пурнăçлас тĕлĕшпе савăт коллективĕ чылай ĕçсем туса пыраť. Савăтра стаханăвла шкул пур, унта 3 группă, квалификацине ўстермели курссенче 7 группă вĕренеççĕ. Производствăра ĕçлекенсенчен 50 процентне тĕрлĕрен вĕренĕве йавăçтарнă. Вĕренĕве инженерла-техникла работниçсем, вăтам шкулсенчи учитĕлсем йертсе пыраççĕ.

Плана йалан ытлашшипех тултарса пыни, продукци хакне йўнетни рабочисен пурнăçпа йăла условисене пысăккăн лайăхлатма май параť. Кăçал производствăра ĕçлекенсенчен 8 çынна кăнтăр йенчи курортсене канма йанă. Чылай стаханăвĕçсем вырăнсенчи санаторисемпе канмали çуртсенче пулнă. Йулашки икĕ çул хушшинче 8-шар хватерлĕ 7 çуртa штука туркă тунă, 75 ача вырнаçмалăх ача сачĕ туса лартнă. Халĕ тепĕр икĕ хутлă çурт туса пĕтереççĕ.

Троцкисла-бухаринла бандитсем, буржуалă-националиссем савăта хĕсĕнсе кĕрсе сăтăрла ĕçсем туса пынă. Вĕсем йăвăç диффузорсене пĕр-пĕринпе çывăх лартса рабочисене сарăмсăр суранлатмала тунă. Халĕ ĕнтĕ вăл сăтăрлăха пĕтернĕ, ĕç процессне улăштарнă. Сăтăрçăсем станоксемпе аппаратсене пройектлассине те сăтăрла, вĕсен вăйĕ чакса пымала тунă. Савăт корпусне станоксемпе аппаратсем ваљљи çеç тунă, кану вăхăтĕнче куљтурăлă канма вырăн хăварман.

Сăтăрçăсем тунă сийенсене пĕтерес тĕлĕшпе савăтри инженерла-техникла работниксем, стаханăвĕçсем, рабочисен пĕтĕм коллективĕ татăклă ĕçсем тăваť. Рационализацилĕ сĕнўсем тăрăх халĕ пĕр тăваткăл метр пăс калăпĕнчен 33 килограм пăс вĕретсе кăларас вырăнне 45 килограм кăлараççĕ. Рабочисене ĕçе кĕнĕ чухне таса тумтирсене хурса хăварма уйрăм çурт тăваççĕ. Ку çуртра 150 шкаф, çăвăнмали пўлĕмсем, парикмахĕрски т. ыт. пулаť.

Октăбĕр уйăх планне савăт ытлашшипех тултарчĕ.

Савăт коллективĕ халĕ стаханăвла йухăма татах та вăйлатса çĕнĕ çулччен çĕнĕ ўсĕм тăвассишĕн, тир-сăран промышлĕннăçĕнчи рабочисен Сойуз Тĕпкомĕн кусса çўрекен йалавне алла илессишĕн, 1939 çула ăнăçлăн куçассишĕн кĕрешет.

Иван Ланин.

„Бољшевик“ савăт инженерĕ.

Хĕрĕх çул учитĕл ĕçĕнче

Александр Куçмич Куçмин Тăвай районĕнчи Нăрваш йалĕнче учитĕлре ĕçлет. Вăл учитĕл пулса ĕçлеме пуçлани кăçалхи нойабĕрĕн 14-мĕшĕнче хĕрĕх çул тултараť.

Куçмин йулташăн çак хĕрĕх çул хушшинче чылай йăвăр кунсем тўссе иртерме тивнĕ. Темле пулсан та вăл хăйĕн йуратнă ĕçне пăрахман. Чи малтан вăл Çĕрпў районĕнче Çавал хĕрри Кăнаш шкулĕнче икĕ çула йахăн ĕçленĕ. Кунта вырăна кĕрес умĕн унăн акă мĕнле „истори“ пулса иртнĕ. Хусанти çеминаринче учитĕл екзамĕнне тытса пĕтернĕ хыççăн вăл Çĕрпўве вырăн ыйтма пынă. Кунта унăн пĕр поп патне пымала пулнă. Попĕ ăна кухњăра чылай кĕттернĕ хыççăн:

— Есĕ, ача, мĕн тума ман пата килтĕн?—тесе ыйтнă.

— Учитĕле кĕме вырăн ыйтма килтĕм,—тенĕ Куçмин.

— Е, çук, есĕ халĕ ача. Сан пеккисем ваљљи мар, çитĕннисем ваљљи те вырăн çук, есĕ çамрăкскер ним те пĕлейрес çук,—тенĕ поп.

— Çамрăк пулсан та, епĕ учитĕле тухма екзамĕн панă, манăн свидетĕлствă та пур. Акă тата кунтăх вырăн ыйтса çырнă прошени те пур,—тенĕ Куçмин.

Поп свидетĕлствăна илнĕ те:

— Матушка, иди-ка, посмотри на этого чувашленка. Учительское звание имеет!—тесе кăшкăрса йанă. Вара поппа майри çамрăк учитĕле темиçе хут çавăркаласа пăхнă. Хăйсем: чувашленок, хряк настоящий, а учительское звание имеет, тесе шăлĕсене йĕрнĕ.

Çапах та ăна вырăн панă. Çак вăл Куçмин попсемпе чи пирвай палланни пулнă. Çакăнтан вăл малашне те попсем учитĕлсене пĕрмай хĕссе пурăннине сăнанă, попсем наукăн, куљтурăн чи хаяр тăшманĕсем пулнине часах сиснĕ.

Александр Куçмин пĕрмайах наукăсемпе интересленсе ĕçленĕ. Хăйĕн пĕлў сахаллине часах сиссе, вăл тăтăшах вĕреннĕ. Кашни çулах çулла Хусана кайса вĕреннĕ, аслă шкула—Университета кĕме хатĕрленнĕ. Хĕлле илнĕ шалува çулла вĕренсе пĕтерсе пынă. Анчах вăл аслă шкула лекеймен. 1905 çулта ăна полици надзора илнĕ. Çавăнпа та вăл Хусана икĕ-виçĕ кунран ытла пурăнма пултарайман. Мускавпа Питĕре пырса курма та пултарайман. Çакăн пирки вăл хăй малашне вĕренме пултарайманнине пĕлсе хăйĕн шăлнĕсене тата йăмăкĕсене вĕрентме тăрăшнă. Çак ĕç унăн чылай ăнăçлă пулнă. Унăн пĕр шăлнĕ художник тата инженер, тепĕр шăлнĕ математикăпа вĕрентекен преподаватĕл. Йăмăкĕсенчен пĕри математикă вĕрентет, тепри артистка пулса ĕçлет.

— Аслă шкула хам лекеймен пулсан та ачасене вĕрентме тăрăшрăм. Ĕлĕкхи вăхăтра пулсан ман ачасем ниçта та вĕренес çукчĕ,—тет вăл.

Халĕ унăн ачисенчен виççĕшĕ аслă шкулран вĕренсе тухнă. Иккĕшĕ аслă шкулта, иккĕшĕ вăтам шкулта вĕренеççĕ. Хăй ачисене тата пĕтĕм ĕççынни çамрăкĕсене вĕренме çул уçса панăшăн вăл партипе правитĕлствăна чунтан-чĕререн тавтăваť.

С. К.

Хула совечĕ перепиçе хатĕрленет

Улатăр хула совечĕ Пĕтĕм Сойузри халăх перепиçне хатĕрленес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттерет. Техникумсенче, рабфаксенче тата вăтам шкулсенче вĕренекенсемпе пухусем туса, пулас перепиç çинчен ăнлантарса параççĕ.

Нумайăх та пулмасť Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ çумĕнчи совет работникĕсен курсĕнче вĕренекенсен пысăк пуху пулса иртрĕ. Кунта перепиçе хатĕрленесси мĕнле пыни çинчен хула совечĕнче ĕçлекен Павлăвă йулташ доклад туса пачĕ.

Пухура нумайĕшĕ тухса калаçрĕç. Курсра вĕренекенсем халăх перепиçне ирттерме хатĕрленес тĕлĕшпе агитатăрсем пулса ĕçлеме сăмах пачĕç. Перепиçе лайăх ирттерме пулса пĕр-пĕринпе социалисăмлă ăмăртăва тухрĕç.

И. Волкăв.

Йединоличниксен лашисем çине хунă налога вăхăтра пухмала

ПАТĂРЙЕЛ. ССР Сойуз Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ йышăннă тăрăх, йединоличниксен лашисем çине хунă налог укçине октăбĕрĕн 15-мĕшĕнче пухса пĕтермеле пулнă. Апла пулин те Татмăш йалсоветĕнче 10.500 тенкĕ пухас вырăнне 1.316 тенкĕ те 64 пус çеç пухнă. Çавăн пекех Кивĕ Сĕнтĕр йалсоветĕнче налог укçи пухасси питĕ йапăх пыраť. 16.500 тенкĕ вырăнне 6.817 тенкĕ çеç пухнă.

Ваçили Мартынăв, Йакăв Седлов тата ыттисем те, пурĕ 7 çын, налог укçине срукченех тўлесе татнă. Çав вăхăтрах Ачастаçи Воробйова, Йевдокийă Ватрушкинă, Йакăв Филиппăв тата ыттисем налог укçине тўлемесĕр тăраççĕ. Йалсовечĕ ку тĕлĕшпе нимĕн те тумасť.

Н. Квасăв.

Йалхуçалăхне механизацилени—ĕç вăйне перекетлет

Йĕпреç районĕнче машинă-тракăтăр станцийĕ ĕçлеме пуçлани улттăмĕш çул çине кайрĕ. Унтанпа пирĕн МТС пур йенчен те чылай тĕрекленчĕ. Кăçал колхозсемпе договăр туса 30 пин те 200 гектар суха тунă. Колхозсен уй-хирĕсенче 10 комбайн ĕçлерĕ, пурĕ 2628 гектар çинчен тырпул вырса пуçтарнă, 2 пин çурă тоннă тырă çапнă. Уйри тырпулсене пуçтарса кĕнĕ вăхăтра комбайнсем колхозсенче 11 пин лаша тата 52 пин çын вăйĕ чухлĕ перекетленĕ.

Пирĕн МТС хăйĕн планне тултарассипе республикăра иккĕмĕш вырăнта тăраť. Н. Йакăвлĕв тракăтăрисăн бригади хăйĕн ĕç нормине йăланах тултарса пыраť. Унăн бригади 1936 çултанпах куçса çўрекен хĕрлĕ йăлава хăйсен аллинчен вĕçертмест. Йакăвлĕв тракăтăрис кăçал 1036 гектар суха туса 3.200 тенкĕ ĕçлесе илнĕ. Унăн бригадинчи С. Хиркин тракăтăрис 364 гектар вырăнне 560 гектар сухаласа плана 115 процент; Михайлăв тракăтăрис плана 146 процент тултарнă. Шмагин комбайнер кăçал 3820 тенкĕ ĕçлесе илнĕ.

В. Вишневский.

— О —

„Вулав çурчĕ ĕçлемест“

Йадуванкин йалкор „Чăваш Коммунĕ“ хаçат редакцине Хĕрлĕ Чутай р-чи Уйпуçĕнчи вулав çурчĕ час-часах хупă тăни, стена хаçачĕ тухманни тата вулав çурчĕн пуçлăхĕ Фадейĕв йăланах ĕçсе çўрени çинчен çырса пĕлтернĕччĕ.

Заметкăна Хĕрлĕ Чутай районĕнчи суттĕç пайĕ тĕрĕслесе тухнă, Фадейĕва асăрхаттарнă.

ТЎРЛЕТНИ

Чăваш Коммунĕ“ хаçатăн октăбĕрĕн 14-мĕшĕнче тухнă номĕрĕнче, „ПСК(б)П историн“ 2-мĕш сыпăкĕн 2-мĕш уйрăмĕнче, 5-мĕш колонкăн 3-мĕш абзацĕнче, Ленин цитатинче, редакци айăпĕпе сăмахсем сиксе йулнă. Вăл цитатăна çапла тўрлетсе вуламала:

„Агĕнтсен çав йышĕ, тенĕ Ленин çак статйарах, шăпах пире кирлĕ организацин кĕлетки пулса тăрĕ: çав организаци хăйĕн ĕçĕпе пĕтĕм çĕршыва çавăрса илме çителĕклĕ таран пысăк пулмала; ĕçе çирĕппĕн те тĕплĕн пайлама çителĕклĕ таран сарлака та тĕрлĕ йенлĕ пулмала; кирек мĕнле лару-тăрура та, кирек мĕнле „çавранусенче“ те тата кĕтменлĕхсенче те хăйĕн ĕçне ним пăрăнмасăр тума çителĕклĕ таран çирĕп пулмала; пĕр йенчен, вăйлăрах тăшмана хирĕç, вăл хăйĕн пĕтĕм вăйне пĕр çĕре пухнă вăхăтра, уçă уйра çапăçассинчен пăрăнма, тепĕр йенчен, çав тăшманăн çавранăçусăрлăхĕпе усă курса, ун çине вăл кĕтмен çĕртен тата кĕтмен вăхăтра тапăнма çителĕклĕ таран çивĕч пулмала (Ленин, т. IV, стр. 112.).

„Чăваш Коммунĕ“ хаçатăн октăбĕрĕн 17-мĕшĕнче тухнă номĕрĕнчи 2-мĕш страницăн 5-мĕш колонкинчи 3-мĕш абзац вĕçне çапла вуламала:

„Çак условисене пула хресченсем пурпĕрех революципе республика тĕрекĕ пулса тăраççĕ, мĕншĕн тесен пĕтĕмĕшпех çĕнтерне революци çеç хресченсене çĕр реформи йенĕпе пурне те, хресченсем мĕн тăвас тенине, вĕсем ĕмĕтленнине, вĕсене чăн-чăнах кирлисене пурне те пама пултараť“ (Ленин, т. VIII, стр. 94—95).

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНАЧ.

Чиркў çыннисен тăшманла ĕçĕсене пĕлсе тăмала, вĕсене тăрă шыв çине кăлармала

ПСК(б)П Тĕпкомĕн 1937 çулти февраљ-мартри пленумĕнче Сталин йулташ: „Епĕр малала мĕн чухлĕ ытларах кайăпăр, пирĕн ăнăçусем мĕн чухлĕ ытларах пулĕç, çĕмĕрсе тăкнă експлоататăрла классен йулашкийĕсем çавăн чухлĕ ытларах усалланса пырĕç, вĕсем çавăн чухлĕ хăвăрт çивĕчрех формăсемпе кĕрешме тытăнĕç, совет государствине хирĕç вĕсем çавăн чухлĕ ытларах пакăç тăвĕç, вĕсем çавăн чухлĕ ытларах кĕрешĕвĕн чи хăйар хатĕрĕсене, пĕтме пўрнисен йулашки хатĕрĕсем пулса тăраканскерсене, йарса тытĕç“, —тенĕ.

Сталин йулташ çакăн пек кăтартса пани вăл тĕне хирĕç кĕрешес ĕçе те пĕтĕмĕшпех тивет. Çака паллă: чиркў çыннисем, çектантсем тĕн йалавĕпе витĕнсе, активлăн контрреволюцилĕ ĕçсем туса пыраççĕ, вĕсем фашисăмăн тропкисла-бухаринла, буржуалă-националисла агĕнчĕсемпе пĕрле сăтăрла, диверçилĕ, шпионла ĕçсем тăваççĕ.

Тĕне хирĕç кĕрешекенсен, агитатăрсен ĕненекенсене лопсен, чиркў çыннисен, çектантсен тăшманла ĕçĕсем çинчен каласа ăнлантарас пулаť. Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн оргăнĕсем Чăваш республикĕнче те чиркў çыннисен контрреволюцилĕ организацисене сахал мар тупса пĕтернĕ.

Акă вăл фактсенчен хăшпĕр тĕслĕхсем.

Вăрмар, Куславкка, Сĕнтĕрвăрри тата республикăри ытти хăшпĕр районсенче те, чиркў çыннисемпе çектантсен контрреволюцилĕ, монархисла организацийĕ ĕçленĕ. Çак организаци халăх хушшинче хăйĕн контрреволюцилĕ ĕçĕсене активлăнрах туса пырас шутпа, хăйĕн активлă членĕсенчен пĕрне, Саратăвă йатлă хĕрарăма „аслă књагинă Ољгă Николайĕвнă“ туса хунă. Çапла вара тăшмансем çак Саратăвă текен хĕрарăм тавра чиркў çыннисемпе çектантсен контрреволюцилĕ, монархисла организацине туса хунă.

Контрреволюцилĕ ĕçсем туса тăма çак организацин çĕр айĕнче виçĕ вăрттăн пўлĕм пулнă. Çак вăрттăн пўлĕмсенче, çынсене кĕлтума пухнă пек пулса, вăрттăн пухусем туса иртернĕ, унта контрреволюцилĕ организаци членĕсем совет влаçне хирĕç кĕрешмели майсем çинчен сўтсе-йавнă.

Халăх хушшинче вĕсем совет влаçне хирĕç, колхоз строитĕлствине хирĕç агитаци туса пынă, тĕрлĕрен контрреволюцилĕ, провокацилĕ суйă сăмахсем сарнă.

Çак организацин йертсе пыракан группи вĕренекен çамрăксем хушшинче те тăшманла ĕçсем туса пынă. Вĕренекен ачасене тĕрлĕрен кучченеççемпе илĕртсе хăйсен килĕсене чĕннĕ. Унта вĕсене чиркĕве çўреме, кĕл йуррисене вĕренме ўкĕтленĕ.

Тискер те хăйар тăшмансен—чиркў çыннисен çак пĕчĕк ушкăнĕ, тĕн йалавĕпе витĕнсе, монархисла ĕçсем туса пынă, совет çĕршывĕнче патша йĕрки туса хурас шутпа совет влаçне хирĕç кĕрешнĕ.

Совет влаçне хирĕç, совет халăхне хирĕç кĕрешме вăй çитереймен пирки, чиркўлĕ-çектантла организацисем, тискер кайăксем пек урса, сăтăрла ĕçсемпе диверçисем организацилес çул çине тăраççĕ.

Акă, тĕслĕхрен, Патăрйел районĕнче „Урă çынсен обшчĕстви“ йатне парса организациленĕ контрреволюцилĕ кулакла-чиркўлĕ ушкăна тупса пĕтернĕ. Çак организаци вăл ĕлĕкхи „Вырăс халăхĕн сойузĕ“ текен монархисла организацин филиалĕ пулнă. Çак ушкăн колхоз строитĕлствине хирĕç сăтăрла ĕçсем туса пынă, партипе правитĕлствă ĕçĕсене хирĕç активлăн кĕрешнĕ. Контрреволюцилĕ ушкăн хăйĕн умне колхозсене аркатас, халăх куçĕ умĕнче совет влаçне варалас задача лартса ĕçленĕ. Уйрăм йединоличниксене хăйсен йенне çавăрас тата колхоза кĕме парас мар шутпа, укçасăрах çуртсем лартса, йусаса панă, выљăхсем илсе панă т. ыт. те.

Çавăн пекех, Патăрйелпе йунашар Йелчĕк районĕнче пулнă кулакла-чиркўлĕ контрреволюцилĕ ушкăн та хăй умне колхозсене аркатас, партипе правитĕлствă йалта туса иртерекен ĕçсене хирĕç саботаж организацилес задач лартса ĕçленĕ. Çураки вăхăтĕнче çак ушкăн йединоличниксем хушшинче çуракине хирĕç саботаж организацилеме пăхнă. „Петрав кунĕ“ йединоличниксене пухса ĕçкĕ тунă, тўлевсĕр кучченеççем салатса панă, çав хушăрах кайа йулнă çынсем хушшинче совета хирĕçле ĕçсем тунă.

Чăваш-Шупашкар епархи йепископĕ йертсе пыракан монархисла чиркў организаци контрреволюцилĕ ĕçсене вăйлăрах сарса йанă пулнă. Çак ушкăн пĕтĕмпех поп таврашĕсенчен тăнă. Вăл Çĕрпў, Улатăр, Кувакинă, Пăрачкав районĕсенче ĕçленĕ.

Çак ушкăн колхоз йухăмне хирĕç активлăн кĕрешнĕ, колхозсене аркатма тăрăшнă. ССРС Верховнăй Совечĕн суйлавĕсем вăхăтĕнче халăха суйлава ан хутшăнăр, тесе чĕннĕ. Контрреволюцилĕ, провокацилĕ суйă сăмахсем сарнă. Патша йĕркине ырланă. Контрреволюцилĕ ушкăнăн пĕтĕм ĕçĕ совет влаçне хирĕç кĕрешесси пулнă.

Хамăр çĕршывра çĕмĕрсе тăкнă харампырла классен йулашкисем тата капиталисăмлă йĕритавралăх тĕрлĕ йышши тĕн организацисемпе совет стройне хирĕç, хамăрăн тăван çĕршыва хирĕç кĕрешме усă кураççĕ.

Çавăнпа та Вăрçăлă Турăсăрсен Сойуз организацисен, агитатăрсемпе пропагандиссен задачи вăл—ĕненекенсене чиркўлĕ-çектантла организацисен тăшманла ĕçĕсем çинчен каласа парасси, çапла майпа—попсен ултавне уçса кăтартасси пулаť.

Уполномоченный Чуваштлавлита № 564

Гор. Чебоксары, типография № 1 Наркомместпрома ЧАССР, заказ № 832, ф. б. 58×84 п. л.